БИБЛИО...

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 2
ШĂМАТКУН
№ 24 (8676)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. СССР Верховнăй Советне пухасси çинчен (1 стр.).
Колхозсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсене иртерес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле (1 стр.).
ВКП(б) Чăваш обкомĕнче (1 стр.).
Писательсен творчествăллă ĕçне лайăхлатмалла. Чăваш писателĕсен пухăвĕнчен (1 стр.).
Пропагандистсене пулăшма. **В. Яковлев.**—Сталин юлташ колхоз строительстви çинчен вĕрентни (2 стр.).
Районти хаçатсене пăхса тухни. Пурнăçран юлса пымалла мар (2 стр.).
Н. Фигуровский. — Д. И. Менделеев. (Вилнĕренпе 45 çул çитнĕ тĕле) (3 стр.).
ВАРМАН ХАТĔРЛЕВĔ. **И. Иванов.**—Первомайски вăрманпромхоз мĕншĕн юлса пырать (3 стр.).
КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ. **Н. Любимов.** — А. Алга сăввисен çĕнĕ сборникĕ (3 стр.).
СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи плана тултарни çинчен урăх çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентмелле, воспитани памалла

Колхозсенчи, предприятисемпе учрежденисенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентесси тата воспитани парасси парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен чи кирлĕ ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çак ĕçĕн пĕлтерĕшĕ халĕ тата та ытларах ӳсрĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсем иртнĕ хыççăн парторганизацисене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем нумай хутшăнчĕç. Вĕсене парти комитечĕсем енчен куллен пулăшса пыни кирлĕ.

Парти енчен ертсе пырас ĕçе çӳлĕ пусăма çĕклес тесен,—вĕрентет пире Сталин юлташ,—пуринчен малтан парти работникĕсен квалификацине ӳстермелле. ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен пуçламăш парторганизаци руководителĕсене тимлĕ тата чăтăмлă вĕрентсе пымалла, вĕсен идейăллă-политикăллă ӳсĕмĕшĕн куллен тăрăшмалла, вĕсене партиллĕ ĕçри паха опытпа тĕплĕ паллаштармалла.

Юлашки вăхăтра нумай райкомсемпе хула комитечĕсем пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентсе воспитани парас ĕçе лайăхлатрĕç, партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсен мелĕсене тăтăшах тĕпчесе вĕренме тытăнчĕç. Парти комитечĕсем парторганизаци секретарĕсемпе семинарсем иртереççĕ, партиллĕ ĕçри паха опытпа паллаштарма канашлусем пухаççĕ, парторганизаци ĕçĕсем çинчен бюросенче е пленумсенче тăтăшах сӳтсе яваççĕ. Парторганизаци секретарĕсен марксистла-ленинла вĕренĕвĕ те лайăхланса пырать.

Тĕслĕхшĕн ВКП(б) Вăрнар райкомне кăтартса пама юрать. Районти пуçламăш парторганизаци секретарĕсене пурне те парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. Хăшпĕр секретарьсем политшкулсемпе кружоксене хăйсем ертсе пыраççĕ. Иртнĕ çулта райком секретарьсене пухса 21 семинар ирттернĕ, вĕсенче парти строительствин ыйтăвĕсене вĕреннĕ, колхозсемпе предприятисенчи пуçламăш парторганизацисен паха опычĕпе паллашнă. Семинарсенче 18 пуçламăш парторганизаци секретарĕн отчетлă доклачĕсене сӳтсе явнă, хуçалăх органĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмалли правăпа усă курас, йышăннă решенисене пурнăçланине куллен тĕрĕслес, партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăхри ĕçсемпе тачă çыхăнтарас, партиллĕ пропагандăпа агитацие йĕркелес, парти ретне илес, çамрăк коммунистсене воспитани парас тата çавнашкал нумай ыйтусене вĕреннĕ. Производство принципне кура, секретарьсен семинарĕсене уйрăммăн ирттереççĕ. Семинарсенче вĕренекен темăсем тăрăх ВКП(б) райком секретарĕсем е пайсен заведующийĕсем лекцисемпе докладсем туса параççĕ.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентес тата воспитани парас тĕлĕшпе ВКП(б) Куславкка, Канаш райкомĕсем те тимлĕрех ĕçleme пуçларĕç. Çапах та хăшпĕр райкомсем пуçламăш парторганизаци секретарĕсен идейăллă-политикăллă пĕлĕвне тата квалификацине ӳстерессишĕн куллен тăрăшмаççĕ, вĕсене партиллĕ-организациллĕ ĕçе йĕркелеме сахал пулăшаççĕ. Нумай пуçламăш парторганизаци секретарĕсем большевиксен историйĕпе теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренме пĕлеймеççĕ. Парти комитечĕсем куллен тĕрĕслемен тата пулăшман пирки хăшпĕр секретарьсем вĕренме пăрахнă. Çавăн пирки-ех ĕнтĕ уйрăм парторганизаци секретарĕсем ĕçре те, политика тĕлĕшпе те вăраххăн ӳсее пыраççĕ. Хăшпĕр чухне тата пурнăçран та юлаççĕ.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе ВКП(б) Советски райкомĕ çителĕксĕр ĕçлет, вĕсене сайра-хутра кăна семинарсене пухать. Çав семинарсенче те партиллĕ ĕç ыйтăвĕсене сахал сӳтсе явнă, хуçалăх тĕлĕшпе тăракан ĕçсене çеç пăхса тухнă. Райкомра ĕçлекенсем ялсенче пулсан пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсене пур енчен те тĕплĕ тишкерсе тухмаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме вырăнти кадрсене тивĕçлипе пулăшмаççĕ.

ВКП(б) Первомайски райкомĕ иртнĕ çулта секретарьсемпе мĕн пурĕ те 7 семинар, вăл шутран колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе 2 семинар кăна ирттернĕ. Çулталăк хушшинче райком бюровĕнче 6 пуçламăш парторганизаци секретарĕн отчетлă доклачĕсене çеç сӳтсе явнă.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентес тата воспитани парас ĕçре паха опыта тĕпчесе вĕренсе, сарса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕç çине пирĕн парти яланах тимлĕ пăхать. Кадрсене куллен ĕçре ӳстерсе пымалла, вĕсене йывăрлăхсене пĕтерессишĕн вĕрентсе хутшăнтарса воспитани памалла.

Кашни районтах лайăх ĕçлекен пуçламăш парторганизацисем сахал мар. Вĕсен опытне сарни пысăк усă кӳрет. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене кăтартса пама юрать. Çак парторганизацисем тулли пурнăçпа пурăнаççĕ, парти пухăвĕсене вăхăтра тата йĕркеллĕ ирттереççĕ, вĕсенче колхоз пурнăçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсене сӳтсе яваççĕ. Ку парторганизацисем колхоз правленийĕн ĕçне тĕрĕслесе тăмалли правăпа тулли усă кураççĕ, производство планĕсене тавас ĕçе активлă хутшăнаççĕ, колхоз кадрĕсене воспитани парас тата вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарас ыйтусемпе тăтăшах интересленеççĕ.

Çавăн пек парторганизацисен паха опытне сарни ытти пуçламăш парторганизаци секретарĕсен опытне пуянлатма, вĕсен квалификацине ӳстерме нумай пулăшать. Анчах хăшпĕр райкомсем тата хула комитечĕсем партиллĕ ĕçри паха опыта сарассине кирлĕ пек йĕркелесе пымаççĕ. Çавăн пирки вара нумай пуçламăш парторганизацисен паха пуçарăвĕсене ытти организацисенче пĕлмеççĕ, вĕсем çинчен парти комитечĕсем хăйсем те час-часах манса каяççĕ.

Партиллĕ ĕçри паха опыта тĕпчесе вĕренесси тата ăна сарса пырасси пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене большевикла пурнăçласа пыма кирлĕ тĕп условисенчен пĕри вăл—партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсене çӳлĕ пусăма çĕклесси пулать. Республикăри пуçламăш парторганизацисене партиллĕ ĕçри паха опытпа хĕçпăшаллантарни, парти работникĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçсене хуçалăхри ĕçсемпе тачă çыхăнтарса туса пыма вĕрентни—кадрсене хуçалăхлă-политикăллă задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пыма вĕрентнине пĕлтерет.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене воспитани парас ĕçре вĕсен доклачĕсене парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен бюровĕсенче сӳтсе явни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хăшпĕр райкомсем парторганизаци секретарĕсен доклачĕсене итлесе пухнă семинарсенче те сӳтсе яваççĕ. Ку тĕлĕшре ВКП(б) Куславкка райкомĕ паха тĕслĕх кăтартать. Вăл иртнĕ çулта 20 пуçламăш парторганизаци ĕçĕсем çинчен бюрора тата семинарсенче сӳтсе явнă.

Парти политикине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе пирĕн кадрсем воспитани илеççĕ, пиçĕхсе пыраççĕ, партиллĕ ĕçĕн меслечĕсене лайăхлатаççĕ. Кадрсене большевикла ĕç меслетне вĕрентес тени вăл, пуринчен малтан, вĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăхри ĕçсемпе тачă çыхăнтарма вĕрентес тенине пĕлтерет. Парти комитечĕсен парторганизаци секретарĕсене организаторла тата политикăллă ĕçĕн паха опычĕпе хĕçпăшаллантармалла. Çавăн пек тусан кăна пирĕн кадрсем промышленноçпа ял хуçалăхĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пыма пултараççĕ.



Мускаври метрополитенăн Большое кольцо текен çĕнĕ çулĕ çинчи «Новослободская» станцин тулашри вестибюлĕ.
Н. ГРАНОВСКИПЕ Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ВЦСПС секретариатĕнче

Профсоюзсен рабочисемпе служащисен ачисене вĕрентсе ӳстерме пулăшмалла

Профсоюз организацийĕсем рабочисемпе служащисен ачисене вĕрентсе ӳстерме нумай пулăшаççĕ. Ачасем валли утренниксем, концертсем, спектакльсем, киносеансем, литература каçĕсем тата вулакансен конференцийĕсем организациленĕ. Хĕллехи каникулсем вăхăтĕнче çĕнĕ çул ĕлкисем, çуркуннехи каникулсем вăхăтĕнче «Ача-пăча кĕнеки эрни» ирттереççĕ. Иртнĕ çулталăкра çакăн пек ĕçсем 590 пин ытла тунă. Ку ĕçсене шкулсенче вĕренекен вунпăр миллион ача хутшăннă.

Профсоюзсен 1.462 культура çуртĕсемпе клубĕсенче ача-пăча секторĕсем тунă, ачасен техникăна вĕренмелли станцийĕсем уçнă. Художество, техника тата ытти кружоксенче 400 пин ача ăслăх вĕренет. Профсоюзсен библиотекисем çумĕнче ача-пăча кĕнекисен уйрăмĕсем тата ача-пăча библиотекисем пин ытла уçнă. Ачасем валли 114 спорт шкулĕ организациленĕ. Профсоюзсен пионер лагерĕсенче каникула пулă ачасен шучĕ нумайланса пырать. 1952 çулта лагерьсенче 2 миллион та 750 пин ача канмалла.

Анчах хăшпĕр профсоюз организацийĕсем рабочисемпе служащисене хăйсен ачисене вĕрентсе ӳстерес ĕçре пулăшма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ-ха. Çавăн пирки ВЦСПС секретариачĕ профсоюз организацийĕсене ачасен амăшĕ-ашшĕсене хăйсен ачисене вĕрентсе ӳстерме пулăшу парас ĕçре вăйлатма, пĕчĕк ачаллă ачисемпе, вăрçăра вилнисен, Аслă Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисемпе, пысăк йышлă çемьесенчи ачасемпе тата ытларах тăрăшма хушнă. Профсоюзсен культура учрежденийĕсенче, рабочи поселокĕсенче тата общежитисенче ачасемпе ĕçлессине анлă сармалла, ку ĕçе вăйлатмалла. (ТАСС).

Магнитогорскри металлургсен уявĕ

МАГНИТОГОРСК, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС) Паян иркене комбинатăн пур цехĕсене те савăнăçлă хыпар саралнă: Комбинат ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул тултарнă ятпа И. В. Сталин юлташ металлурги комбиначĕпе «Магнитострой» трестра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерĕсемпе техникĕсем тата служащисем патне салам яни çинчен хыпар илнĕ.

Паян Магнитогорскри металлургсем уйрăмах пысăк çĕкленӳпе тăрăшса ĕçленĕ. Пĕрремĕш мартен цехĕн сталевщиксен коллективĕ кăнтăрла кашни хут хурçă графикпа палăртниччен ытларах шăратса кăларнă, перекетлесе вăхăт шучĕпе ĕçлесе плантан ирттерсе çĕршер тонна хурçă шăратнă. Смена вĕçленнĕ хыççăн металлургсемпе строительсен пĕтĕм заводри митингĕ пулнă. Хисеплĕ металлург, домна патĕнчи ĕçсен мастерĕ Горностаев юлташ сăмах илнĕ. Вăл аслă Сталина тав туса пĕрӳллĕ сăмах каланă.

Митинга пухăннисем пысăк хавхаланупа И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă. Комбинат коллективĕ çĕршывăри мĕнпур металлургсен патне çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн, агрегатсемпе лайăхрах усă курассишĕн, хурçă кăларт шăратмалли меслетсене ĕçлессине анлă сарассишĕн, производствăри тăкаксене пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлеме чĕнсе çыру янă.

Каçхине А. С. Пушкин ячĕпе тăракан драма театрĕнче пĕтĕм хулан савăнăçлă каçне ирттернĕ.

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔНЧЕ

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец-тимĕрçĕсемпе электросварщиксен пуçарăвĕ çинчен

Канашри вагонсем юсакан заводри Семенов, Слепцов, Галкин, Гордеев тимĕрçĕсем, Митрофановпа Михеев электросварщиксем сменăри задание 7 сехетре тултарассишĕн, смена вĕçлениччен вăхăтра планран ирттерсе продукци туса кăларассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарнă.

ВКП(б) обком бюровĕ Канашри вагонсем юсакан заводăн тимĕрçĕ цехĕнчи стахановецсем оборудованине кăтартуллă пăхса усраса тата лайăх ĕçлеттерсе, малта пыракан ĕç меслечĕсемпе усă курса, сакăр сехетри сменăри задание 7 сехетре пурнăçлама, смена вĕçлениччен планран ирттерсе продукци туса кăларма пуçарнине ырланă.

ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсене, Чăваш АССР-ĕнчи промышленность предприятийĕсенчи партипе профсоюз организацийĕсене Канашри вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕсемпе электросварщиксен хаклă пуçарăвне анлă ăнлантарса пама, сменăпа талăкри задание кашни рабочи, бригада, цех тата предприяти срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарма хушнă.

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец-тимĕрçĕсем тата электросварщиксем пуçарнипе сменăри производство заданине срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту мĕнле пынине республикăри, районсенчи тата предприятисенче нумай тиражлă хаçатсенче анлă çутатма хушнă.

Колхозсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсене иртерес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх, колхозсенче çулсерен отчет тата отчетпа суйлав пухăвĕсем ирттереççĕ. Çак пухусем политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Опыт çакна кăтартса парать: отчетпа суйлав пухăвĕсене ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем кирлĕ пек ертсе пынă çĕрте вĕсем йĕркеллĕ иртеççĕ, ялхуçалăх артелĕн членĕсем çулталăк отчетне тĕплĕ сӳтсе яваççĕ, правлени ĕçĕсене пур енчен те тишкерсе тухса критикăлаççĕ тата колхозсен ĕçне лайăхлатма паха сĕнӳсем параççĕ.

Анчах та хăшпĕр ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем отчетпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленес тата вĕсене иртерес ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ, çавна пула пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ.

Республикăри нумай колхозсенче тупăшсене валеçес ĕçре йăнăшсем тăваççĕ, мĕнле ĕçленине кура ĕçшĕн ĕçкунĕсем хушса тӳлессине тата чакарассине пурнăçламаççĕ, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх продуктсемпе укçа тенкĕ памаççĕ. Районти ялхуçалăх пайĕсем колхозсен отчечĕсене тĕрĕсленĕ чухне çав çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ чухне пысăк çитменлĕхсем тăваççĕ. Шăхасан районĕнчи Ворошилов ячĕпе тата Ленин ячĕпе тăракан, «Память Ильича» ялхуçалăх артелĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене колхозниксен йышĕ çитмесĕрех ирттернĕ. Çак районтах отчетпа суйлав пухăвĕсенче, ĕçкунĕсен минимумне тултарман тесе, колхозниксен пысăк ушкăнне списоксем тăрăх ялхуçалăх артелĕн членĕнчен кăларнисем пулнă. Сăмахран, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра колхозниксен йышĕ çителĕксĕр пулнă пухурах артель членĕнчен список тăрăх 35 çынна кăларнă, çав шутра ĕçкунĕсен минимумне ирттерсе тултарнă колхозниксем пулнă.

Чылай районсенче, парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен представителĕсем колхозниксен пухăвĕсене ирттерме пухусем умĕн кăна пыраççĕ, правленисене тата колхоз председателĕсене пухусене ирттерме практикăллă пулăшу памаççĕ, правленисен председателĕсен тата ытти ĕçлĕ çынсен çитменлĕхĕсене кăтартса парас тĕлĕшпе ĕçлĕ критика сарма пулăшмаççĕ. Çакăнпа пĕрлех тата çакăн пек тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ: правлени отчечĕсем тăрăх практикăллă мероприятисем палăртмаççĕ, 1952 çулта общественнăй хуçалăха вăйлатас енĕпе кирлĕ ĕçсем туса ирттермеллине кăтартса памаççĕ. Чылай чухне йышăнакан решенисенче колхозниксем панă сĕнӳсене шута илмеççĕ. Шупашкар районĕнчи «Память Ленина» колхозра çавăн пек пулнă та ĕнтĕ. Кунта отчетлă пухура йышăннă решени мĕн пурĕ те икĕ пунктран анчах тăрать: вĕсенче правлени отчетне тата ревизи комиссин отчетне çирĕплетесси çинчен çеç каланă. Решенире ниепле практикăллă сĕнӳсем те çук, çав вăхăтрах колхозниксем çавăн пек сĕнӳсем нумай панă. Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕн представителĕ—райплан председателĕ Свинцов юлташ пуху ирттерес ĕç çине çиелтен пăхнă, вăл колхоза пуху пуçланиччен кăшт маларах çеç çитнĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен колхозсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленсе лайăх ирттерме кирлĕ мерăсем йышăнмалла, халиччен пулнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле. Отчетпа суйлав пухăвĕсене пур çĕрте те лайăх хатĕрленсе ирттермелле тăвас пулать. Колхоз правленийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çивĕччĕн критикăласа çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтермелле, колхозниксемпе колхозницăсене колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетсе пыма, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерме мобилизацилемелле.

Писательсен творчествăллă ĕçне лайăхлатмалла

(Чăваш писателĕсен пухăвĕнчен)

Иртнĕ 1951 çулта Чăваш совет писателĕсем творчествăллă ĕçре чылай паллă çитĕнӳсем турĕç. Вĕсем хăйсен пултарулăхне куллен ӳстерсе пырса вулакансене самаях пысăк та илемлĕ, содержани енчен пахă произведенисем пачĕç. Вĕсен шутне К. Туркăн «Пăмраллă ял», В. Салайăн «Летчиксем» романĕсем, А. Медведевăн «Пысăк чыс», А. Артемьевăн «Хĕрлĕ Çăлтăр», Н. Григорьевăн «Çуллахи кунсем» ятлă повеçĕсем кĕреççĕ.

Чăваш поэчĕсем те пахă произведенисем çырас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕç. Вĕсем коммунизмăн аслă стройкисем, çутçанталăка çĕнетсе улăштармалли Сталинла аслă план пурнăçа кĕрсе пыни çинчен, хăйсен паттăр ĕçĕпе мире çирĕплетессишĕн ырми-канми кĕрешекен çынсем çинчен çырнă, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантаракан пахă произведенисем сахал мар пачĕç. П. Хусанкайăн «Вăрман юрлать», А. Алган «Çуралнă çĕршыври», В. Давыдовăн «Сăмрăк ăру», Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучи» ятлă кĕнекисем, Ст. Шавлин сăвăсемпе поэмăсен сборникĕ, авторсен коллективĕн «Миршĕн» ятлă сборникĕ пичетленсе тухрĕç.

Сӳлерех асăннă произведенисенчен нумайăшĕ, тематика енĕпе начарах мар пулин те, илемлĕхĕ енчен, илемлĕ литературе чăнчипе ăсталăх енчен тивĕçлĕ вырăнта мар. Çакă уйрăмах А. Медведевăн «Пысăк чыс», П. Малгайăн Куславккари пурăнмалли çуртсем тăвакан завод çинчен çырнă, П. Тукташăн «Айхал шывĕ хĕрринче» очеркĕсене палăрать. Иртнĕ çулта «Ялав» журналта А. Талвирĕн пурнăçа, совет çыннисен сăнарне пăсса кăтартакан, пулма пултарайман ĕçсем çинчен çырнă «Пĕлтĕр йĕрĕ» калава пичетлени çакна яр-уççăн кăтартса парать. Çавăн пекех А. Эсхелĕн «Мыскара» калавĕ те идеологи тĕлĕшĕнчен начар произведени пулса тăрать.

Пичетре хăшпĕр чăваш поэчĕсем хальхи пурнăçпа çыхăнса тăман сăвăсем вырăн тупни вулакансешĕн питех те кӳренмелле. Сахал пулсан та çавăн пек тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ.

Иртнĕ çул театр сцени çинче историе пăсса кăтартакан, буржуаллă-националистла шухăшсенчен тасалса çитеймен «Константин Иванов»—(авторĕ М. Бомкинский) тата Трофимовăн «Чакка» пьесăсене лартса панă.

В. Ржанов çырнă «Шурă кăвакарчăн», К. Пайрашăн «Чĕри лайăх», А. Эсхелĕн «Виçĕ туй» пьесисене писательсен правленийĕ çумĕнчи драма секцийĕсенче сӳтсе явса палăртнă çитменлĕхсене тӳрлетме сĕннĕ. Анчах авторсем пьесăри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. В. Алагерăн «Тăван Атăл» альманахра пичетленнĕ «Виçĕ хĕр» пьесăна та сцена çинче лартма юсаса лайăхлатмалла.

Хăшпĕр писательсен произведенийĕсенче пысăк çитменлĕхсем пулни вăл литературăра критика тивĕçлĕ вырăн йышăнманнинчен нумай килет. Критика чăваш литература ӳсĕмĕнчен юлса пырать, вăл литература аталанăвне хăвăртлантарса ертсе пыракан вăй пулса тăрайман-ха.

Ача-пăча литератури вăраххăн аталанса пырать. Çак ĕçе писательсем сахал хутшăнаççĕ.

Чăваш писателĕсен иртнĕ çулхи ĕçĕсене пĕтĕçтерсе тухас тата умра тăракан задачăсене палăртас тĕлĕшпе январĕн 29—30-мĕшĕсенче писательсен, издательство работникĕсен, журналистсен, вулакансен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура «Чăваш прози 1951 çулта» ыйту тăрăх Стихван Шавлы, «Чăваш поэзи 1951 çулта» ыйту тăрăх Яков Ухсай тата пĕлтĕр хаçатсемпе журналсенче пичетленсе тухнă критикăллă статьясем çинчен А. Алга тунă докладсене итлесе сӳтсе ярĕç.

Калас пулать, доклачиксем хăйсен доклачĕсенче пĕлтĕр пичетленсе тухнă прозăпа поэзи произведенийĕсене тĕплĕн пăхса тухни, вĕсене тарăн анализ туса пани пулмарĕ. Вĕсем чăваш писателĕсем пĕлтĕр тунă творчествăллă çитĕнӳсене тивĕçлипе пăхса тухмарĕç. Ун вырăнне, хăшпĕр писательсен творчествăллă ĕçĕнчи лайăх енсене курмасăр, уйрăм произведенисенчи уйрăм çитменлĕхсем çинче ытларах чарăнса тăчĕç.

Евстафьев юлташ: П. Хусанкай «Тăван Атăл» альманахра чăваш литератури çинчен çырнă статьяра çамрăк авторсене пулăшас вырăнне вырăнсăр тăрăхласа кулать, авторсене «шăл çеммипе» кура çеç критикăлать, тет.

— Çулталăк хушшинче тунă творчествăллă ĕçсене пĕтĕçтерсе пăхнă чухне драматурги çинчен ытларах каламалла,—тет Ржанов юлташ.—Чăвашла оригиналлă пьесăсем çук пирки Чăваш государство академи театрĕ кăçалхи сезонта чăваш драматургĕсен пĕр çĕнĕ пьесине те лартса кăтартаймарĕ. Чăвашла çырнă «Константин Иванов», «Çывăх çăлтăрсем», «Çурхи кĕвĕсем» пьесăсем сцена çинче пĕр сезон лартнă хыççăнах репертуартан тухса ӳкрĕç. Çакă вăл чăваш драматургĕсен творчествăри çитменлĕхĕ. Буракансем паянхи чăн-чăн пурнăçа, паянхи геройсене сăнласа паракан пьесăсем ыйтаççĕ. Анчах пирĕн ун пек пьесăсем сахал. Пьесăсен тематики чухăн. Чăвашла пьесăсене вырăсла куçарса вырăсла драма театрĕн сцени çинче лартассине йĕркелемелле. Çакă вырăссене чăваш драматургĕсен произведенийĕсемпе, чăваш литературипе ытларах паллашма пулăшĕ.

Доклад тăрăх çавăн пекех А. Отачкин Ленинградран килнĕ композитор Пустыльник, Мария Ухсай, Г. Краснов, В. Алендеев, В. Салай, Н. Ильяев тата ытти юлташсем тухса каларĕç.

Тухса калакансем Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕ писательсен союзĕн организациллĕ ĕçне çителĕксĕр туса пынăшăн критикăларĕç. Творчество секцийĕсем хутран-ситрен кăна пухăнаççĕ, вĕсенче чăваш литературине аталантарас тĕлĕшпе тĕп ыйтусене лартмаççĕ. Çĕнĕ произведенисене пичете паричченсӳтсе ямаççĕ. Секци руководителĕсем К. Турхан, С. Шавлы, В. Ржанов, А. Алга, Н. Ильбек юлташсем секцисен ĕçĕсене йĕркелесе ертсе пырасшăн тăрăшмаççĕ.

Пуху «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманах халĕ те вăхăтра тухса тăманнине, унта пичетленекен произведенисен пахалăхне ӳстерме кирлине палăртрĕ.

Асăннă çитменлĕхсене пĕтерес, писательсен организацийĕн ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртса пуху тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

„В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни çинчен"

Государствăн политика литературин издательстви П. Н. Поспелов юлташ Мускавра 1952 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче пулнă хурлăхлă-чаплă ларура «В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни» çинчен тунă доклада уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

СССР Верховнăй Советне пухасси çинчен

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессине 1952 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче, Мускав хулинче пухас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.

1952 çулхи январĕн 31-мĕшĕ.

Пропагандистсене пулăшма

Сталин юлташ колхоз строительстви çинчен вĕрентни

Республикăри колхозсенче халĕ отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Çакна май ялти пропагандистсемпе активистсем колхозниксене Сталин юлташ колхоз строительстви тĕлĕшпе вĕрентни çинчен, пирĕн колхозсем çирĕп икĕ çул хушшинче тунă ӳсĕмсемпе çĕнтерӳсем çинчен каласа пани питех те вырăнлă пулнă пулĕччĕ.

* * *

Маркспа Энгельсах ĕçсыни хресченсен хуçалăхĕсене пĕрлештересси çинчен вĕрентнĕ. Ĕç хресченĕсене капитализмла пусмăрлăхран тухма рабочи класс кăна пулăшма пултарать, тенĕ вĕсем.

Хăйĕн «Крестьянский вопрос во Франции и Германии» ятлă кĕнекинче Энгельс çапла çырнă:

«Вак хресченсем тĕлĕшпе пирĕн задача чи малтан çакăнта пулать: вĕсен уйрăмшар производствине уйрăмшар килĕсене юлташлăха пĕрлештермелле, анчах ирĕксĕрлесе мар, пример кăтартса тата çавна тума общество енчен пулăшса».

Энгельс кăтартса панă тăрăх, пролетариат диктатури вăхăтĕнче производствăна пĕрлештерни коммунизма куçмалли çул çинчи пĕр пусăм пулса тăрать, çав пĕрлештернĕ производствăна ертсе пырас ĕçе пролетариат государстви тытăмлă вырăн йышăнса тăрать.

Анчах та Маркспа Энгельс хресченсене социализм строительствине явăçтармалли çулсемпе формăсене пĕтĕмĕшпе илсе кăна кăтартса панă, вĕсен кăтартăвĕсене аслă Ленинпа Сталин малалла творчествăллăн аталантарнă, пирĕн большевиксен партийĕ вара, хăйĕн гениаллă çулпуçĕсем ертсе пынипе, марксизма пуçаракансем витĕр курса вĕрентсе каланисене пурнăçа кĕртнин чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕ.

Ленин партие кооперации планĕпе хĕспăшаллантарчĕ, социализм пĕр çĕршывра çĕнтересси çинчен калакан вĕрентӳпе пуянлатрĕ. Вăл вĕрентнĕ тăрăх, социализмлă общество тумашкăн буржуазипе помещиксене сирпĕтсе антарни кăна мар, кунсăр пуçне тата хресченсен вак таварлă хуçалăхне социализмлă никĕс çинче çĕнетсе урăхлатни кирлĕ. Çавăнпа та Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Ленин коллективлă хуçалăхсем организацилеме чĕннĕ. 1919 çултах ĕнтĕ пирĕн çĕршывра икĕ пин ялхуçалăх коммунисем тата тăватă пине яхăн артельсем пулнă.

Ленинăн кооперации планне хирĕç парти тăшманĕсем, ленинизм тăшманĕсем хаяррăн кĕрешнĕ. Вĕсем кооперации планне аркатса яма хăтланнă. партие Ленин кăтартнă çул çинчен пăрса яма хăтланнă. Ленин идейисене уйăн аслă соратникĕ Сталин юлташ кӳтĕлесе малалла аталантарнă.

Сталин юлташ пире çĕрĕçĕнче пысăк хуçалăхсем, шултăра хуçалăхсем кирлĕ, тесе вĕрентнĕ. Çĕрĕçĕнчи шултăра хуçалăх вăйлă пулать, мĕншĕн тесен вăл машинăсемпе усă курма, наука хушнисене пурнăçа кĕртме, удобренисемпе усă курма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, таварлă тырпул туса илме пултарать. Хресченсен вак хуçалăхĕ вăйсăр пулать, мĕншĕн тесен вăл машинăсемпе, наука кăтартнисемпе тата удобренисемпе усă курма пултараймасть, çавăнпа та вăл таварлă тырпул сахал туса илет.

Калас пулать, шултăра хуçалăх тумалли çулсем тĕрлĕрен пулаççĕ. «Çĕрĕçĕнче шултăра хуçалăх тумалли икĕ çул пур,—тесе вĕрентет Сталин юлташ: капитализмлă çул, хресченсене массăллăн юхăнтарни урлă тата шултăра капитализмла имениесем, ĕçлеттерсе пусмăрлакан имениесем организацилени урлă пурнăça кĕртмелли çул, тата социализмлă çул, хресченсен вак хуçалăхĕсене коллективлă шултăра хуçалăхсем туса пĕрлештерни урлă пурнăça кĕртмелли, хресченсене юхăнтармасăр тата ĕçлеттерсе пусмăрламасăр пурнăça кĕртмелли çул» (XI том, 8 стр.).

Совет çĕршывĕ капитализмла шултăра хуçалăхсем тăвас çул çине тăма пултараймаи. Вăл социализм йышши шултăра хуçалăхсем, çĕнĕ техникăпа хĕспăшалланнă хуçалăхсем тăвас çул çине тăма кăна пултарнă, вăл çул çине тăма тивĕçлĕ те пулнă. Çавăн пек хуçалăхсем вĕсем—совхозсемпе колхозсем пулчĕç.

Çĕнĕ, колхозлă çул çине куçма тытăнмашкăн, колхозсене массăллăн куçма тытăнмашкăн малтанлăха хăшпĕр условисем кирлĕ пулнă, вăл условисемсĕр массăллă колхоз юхăмĕ çинчен шухăшлама та пулман.

Чи малтан, Сталин юлташ кăтартса панă тăрăх, буржуазипе помещиксене сирпĕтсе антарса совет влаçĕ, хресченсене колхоз çулĕ çине тăма пулăшакан власть туса хуни кирлĕ пулнă. Ку задачăна 1917 çулхи Октябрьте пурнăçа кĕртнĕ. Большевиксен партийĕпе совет влаçĕ рабочисемпе хресченсене помещиксемпе капиталистсен влаçне сирпĕтсе антарма, вĕсенчен заводсемпе çĕрсене туртса илсе пĕтĕм халăх пурлăхĕ туса хума пулăшрĕç.

Кунсăр пуçне, çĕршыва индустриализацилени, тракторсем туса кăларакан çĕнĕ промышленность тата ялхуçалăх машинисем тăвакан заводсем туса лартни кирлĕ пулнă, çав тракторсемпе машинăсене колхозсене парса пулăшма май тумалла пулнă. Индустриализаци политикине пурнăçа кĕртнипе пула массăллă колхоз юхăмĕ пуçланнă тĕле пирĕн çĕршывра ĕнтĕ чылаях вăйлă социализмлă индустри пулнă, вăл колхозлă çĕрĕçĕн тĕп ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултарнă.

Юлашкинчен, массăллă колхоз юхăмне пуçарса яма малтанлăха рабочи класпа хресченсем хушшинчи союза тĕреклетни, хулапа ял хушшинчи çыхăнăва тĕреклетни кирлĕ пулнă.

«Ку çыхăнăвăн тĕллевĕ акă мĕнре пулать:—тесе вĕрентет Сталин юлташ,— хресченсене рабочи класпа, пирĕн пĕтĕм аталанăва ертсе пыракан класпа çывăхартмалла, хресченсемпе рабочи класс хушшинчи союза тĕреклетмелле, çав союзăн ертсе пыракан вăйĕ рабочи класс пулса тăмалла, хресченсене тата вĕсен шухăш-кăмăлĕсене, вĕсен производствине коллективизм майлă майĕпен урăхлатса çĕнетмелле, çапла вара классене пĕтерме условисем туса хатĕрлемелле» (çавăнтах, 161—162 стр.).

Малтанхи нумай мар коммунăсен, артельсен тата совхозсен примерĕпе усă курса хресченсем массисем хушшинче коллективизм майлă анлă агитаци туни тата тавар илсе сутакан кооператив организацийĕсем туса хресченсене ушкăнпа ĕçleме хăнăхтарни хресченсен массăллăн колхоза куçасси патне илсе пычĕ.

Партипе совет влаçĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн, социализмлă индустри туса хурассишĕн нумай вăхăт хушши тимлĕн кĕрешнĕ хыççăн, хресченсене массăллăн колхоза куçма кирлĕ малтанхи условисене туса çитерчĕ. Çавăн, пирĕн çĕршывра коллективизаци пĕтĕм историрен, пĕтĕм аталану законĕсенчен тухса тăракан, пурнĕрех пулма тивĕçлĕ ĕç пулса тăчĕ.

Ленинăн коопераци планĕпе усă курса, Сталин юлташ ялхуçалăхне коллективизацилемелли теорие тарăннăн аталантарса туса хатĕрлерĕ те ĕçре пурнăçа кĕртрĕ. Вăл ялти социализмлă хуçалăхăн колхозлă форми пирĕн тăракан майĕпа пур енчен те тĕплĕн сутатса пачĕ. Массăллă колхоз юхăмĕ пуçлансанах вăл çапла кăтартса пачĕ: колхоз строительствин чи кирлĕ те тĕп вырăн йышăнакан сыпăкĕ вăл—халĕхи вăхăтра ялхуçалăх артелĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл колхозниксен харпăр хăй интересĕсене вĕсен обществăллă интересĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарма май парать, терĕ.

1929 çул вĕçнелле массăллă колхоз юхăмĕ пуçланчĕ. Ку вăл колхоз юхăмĕнчи çĕнĕ тапхăр пулнă. «Халăхи колхоз юхăмĕнче çĕнни тата чи паллă вырăн йышăнса тăраканни вăл,—тесе çырнă Сталин юлташ хăйĕн «Аслă улшăну çулталăкĕ» ятлă паллă статьинче,—çакăнта пулать: колхоза хресченсем халичченхи пек уйрăм ушкăнсемпе мар, пĕтĕм ялĕпе, пĕтĕм вулăспа, пĕтĕм районпа тата пĕтĕм округпа та кĕреççĕ. Ку мĕне пĕлтерет-ха? Ку вăл колхоза [illegible] кĕнине пĕлтерет». (Ленинизм ыйтăвĕсем, 272 стр.).

Хресчен массисене татăклăнах колхоз çулĕ çине тăма хатĕрлесси, çакăн пекех вĕсене çак çул çинче çирĕплетсе хăварасси те вăйлă класлă кĕрешӳ условийĕсенче пулса пынă, социализмшăн тăшманла вăйсем, кулаксенчен пуçласа партие рабочи класăн ыхналлă тăшманĕсем—троцкистла-бухаринла банăсем таранах, хаяррăн хирĕç тăнă условисенче пулса пынă.

Сталин юлташ ертсе пынипе парти çав тăшмансене тата вĕсен çĕрĕк теорийĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Ку вăл социализмлă строительствăна анăçлăн саркса пыма кирлĕ услови, пирĕн партие историллĕ çĕнтерӳсем тума май панă условисенчен пĕри пулса тăнă.

Парти çулпуçĕ çапла вĕрентнĕ: коллективизаци тăвасси хресченсем колхоза лăпкăн та кал-кал кĕрес йĕркепе мар, хресченсем кулаксене хирĕç массăллăн кĕрешес йĕркепе пулса иртмелле. Çавăнпа та талккишпех колхоза куçасси кулаксен класне пĕтерес политикăна тăчĕ çыхăнса тăнă. Кулаксен эксплуататорла йăлисене пӳлсе пырас политикăран кулаксен класне пĕтерес политика патне куçма кирлине Сталин юлташ теори енчен çирĕплетсе панă. Çĕршывра колхоз юхăмĕ анлă сарăлнипе пула тата чылай районсенче талккишпех колхозсене куçнипе пула тырпул туса илес ĕçре кулаксен хуçалăхне колхозсемпе совхозсен хуçалăхĕпе улăштарма çителĕклĕ тăракан материаллă никĕс пулса тăнă. Çакна цифрăсемпе çирĕплетсе парса, Сталин юлташ 1929 çулта аграрник-марксистсен конференцийĕнче çапла каланă: «Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпир кулаксем çине тапăнса пыма халĕ питех те анăçлăн пулса пырать... Акă мĕншĕн эпир юлашки вăхăтра кулаксен эксплуататорла йăлисене пӳлсе пырас политикăран кулаксен класне пĕтерес политика патне куçрăмăр» (çавăнтах, 292 стр.).

Талккишпех коллективизаци тунă никĕс çинче кулаксен класне пĕтерес политикăна куçни пирĕн çĕршыври социализм строительствинче çĕнĕ тапхăр пуçласа янă.

«Çакă вăл питех те пысăк революциллĕ улшăну пулнă, обществăн кивĕ пахалăхĕнчен унăн çĕнĕ пахалăхĕ патне сиксе куçни пулнă, çак сикĕм хăйĕн результачĕсемпе 1917 çулхи Октябрьти революциллĕ улшăнупа пĕр пекех пысăк вырăнта тăнă...

Вăл, çак революци, пĕрре çапсах социализм строительствин виçĕ тĕп ыйтуне татса панă:

а) Вăл пирĕн çĕршыври чи нумай йышлă эксплуататорла класа, кулаксен класне, капитализма каялла тавăрассин тĕрекне, пĕтернĕ;

б) Вăл пирĕн çĕршыври чи нумай йышлă ĕçсыннисен класне, хресченсен класне, капитализма çуратса тăракан уйрăм хуçалăхлă çул çинчен пĕрлешулă, колхозлă, социализмлă хуçалăх çулĕ çине куçарнă;

в) Вăл совет влаçне халăх хуçалăхĕн чи сарлака та калама çук кирлĕ, анчах та чи юлнă пайĕнче—ялхуçалăхĕнче социализмлă никĕс туса панă» (ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ, 372 стр.).

* * *

Хресченсем колхоза куçасси массăллăн пынă вăхăтра вырăнсенчи партипе совет работникĕсем чылайăшĕ парти çул-йĕрĕнчен пăрăнса кайнă, вăл кăтартса панисене пăснă. Ленинпа Сталин колхоз строительстви çинчен вĕрентнин тĕп шухăшне ăнланса илмен пирки, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1930 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕнче яр-уççăнах кăтартса панисене шута илмен пирки, çав работниксем коллективизаци процентĕ хыççăн хăваланă, хресченсене колхоза явăçтарас ĕçре ăнлантарса ĕнентерес меслетпе усă курас вырăнне бюрократла декретсем кăларма пăхнă. Ялхуçалăх артельне колхоз юхăмĕн тĕп форми тăвас вырăнне çав «сулахай» сулăнчăкçăсем тӳрех коммунăсем тума хăтланнă.

Çакăн пек пысăк йăнăшсене пула чылай районсенче хресченсем кăмăлсăр пулнă. Парти тăшманĕсем «сулахай» сулăнчăкçăсен йăнăшĕпе усă курнă. Çак тапхăрта Сталин юлташ пирĕн парти пурнăçĕнчи чи хăрушă тапхăрсенчен пĕри, тесе каланă.

Çак ответлă тапхăрта Сталин юлташ 1930 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче «Ӳспехсене пула пуç çаврăнни» ятлă статья, 1930 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнче тата «Колхозник юлташсене панă ответ» ятлă статья çырса пичетлесе кăларать. [illegible] тата колхоз строительствинче [illegible] Сталин [illegible] вырăн йышăнса тăнă.

Сталин юлташ кăтартса панă тăрăх, колхоз юхăмĕнчи йăнăшсене [illegible] хресчен [illegible] пулнă, [illegible] хресченсем хуçалăх [illegible] пирки пулнă.

Çав историллĕ паллă статьисенче Сталин юлташ халĕхи вăхăтра колхоз юхăмĕн тĕп форми пулса тăракан ялхуçалăх артелĕ çинчен калакан хăйĕн вĕрентнине малалла аталантарнă. [illegible] артель пирки кăтартса панипе «сулахай» йăнăшсене хăвăрт тӳрлетме пулăшрĕç кăна мар, тата колхоз юхăмне малалла тӳрĕ аталантарса пыма май туса пачĕç.

Кулаксене çĕмĕрсе пĕтернĕ хыççăн тата колхоз строительстви йăнăшĕсене пĕтернĕ хыççăн колхоз юхăмĕ хăйĕн аталанăвĕн çĕнĕ тапхăрне кĕнĕ. «Халĕ ĕнтĕ,—тенĕ Сталин юлташ пĕрремĕш пятилеткăн итогĕсем çинчен тунă докладра,—колхоза çирĕплетес пулать: вĕсене организаци енĕпе тĕреклетмелле, вĕсенчен сăтăрçăсене хăваласа кăлармалла, колхозсене малалла ĕçре тĕрĕсленнĕ чăн-чăн большевикла кадрсене суйласа илмелле те колхозсене чăн-чăн большевикла колхозсем тумалла» (Ленинизм ыйтăвĕсем, 384—385 стр.).

Çак вăхăтра класс тăшманĕ парти политикине хирĕç, колхозсене хирĕç кĕрешмелли хăйĕн тактикине улăштарнă, вĕрентнĕвĕн усă формисенчи вăртăн формисем патне куçнă, вăртăн кĕрешес тактика çине куçнă. Тăшман колхозсене [illegible] тапăнма тытăннă. Сталин юлташ тăшманăн çак пысăк пулăшнине те вăхăтра тĕрлĕ шыв çине кăларнă. «Ялта ĕçлесе çинчен» каланă хăйĕн паллă сăмахĕнче вăл ялти партилле ĕçре çитменлĕхсене икĕ тарăнăн тупса палăртнă тата колхоз строительстви тĕреклетме тĕллевре тумалли ĕçсен конкретлă программине палăртса панă.

Вăл кăтартса панă тăрăх, колхозсен ӳсни ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе партипе Совет правительстви тăрăшассине чакармасть, пысăклатать. Шултăра ялхуçалăхне плансăр ертсе пыма çук, самотек çулĕ никсăлăнлăхĕнче те ыйтăвсем хăрушă, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм ĕçе пĕтерсе хутма пултарать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1933 çулхи январьте пулнă пленумĕ, Сталин юлташ панă тăрăх, колхозсене пур енĕпе те пысăк пулăшу пама парти организацийĕсене чĕнсе каларĕ. Пленум колхозсенче ĕçлекен МТС сем çумĕнче тата совхозсенче политикăллă отделсем организацилеме йышăнчĕ.

Политотделсем парти хушнă ĕçсене чысăлăн пурнăçа кĕртрĕç, вара вĕсене 1934 çулта партин районсенчи комитечĕсемпе пĕрлештерчĕ.

Партин XVII-мĕш съездĕнче тунă отчетлă докладра, ялхуçалăхне аталантарнин итогне туса, Сталин юлташ çапла кăтартса панă: 1929 çултан пуçласа 1933 çула çитиччен пĕтĕм тапхăр ялхуçалăхĕшĕн реорганизаци тапхăрĕ пулнă, ку вăхăтра аталану пурнăçĕн ытла колхозсен тата вĕсен кадрĕсен ĕç пахалăхне лайăхлатас енĕпе мар, колхозсен йышне ӳстерес тата çĕнĕрен те çĕнĕрен районсене колхоза явăçтарас енĕпе пулса пынă.

Партин XVII-мĕш съезчĕ пухăннă тĕле ялхуçалăхĕнчи реорганизаци тапхăрĕ хыçа тăрса юлнă.

«Коллективизацин малашнехи процесĕ,—тесе кăтартса панă Сталин юлташ,—хресченсен уйрăм хуçалăхĕсене колхозсем майĕпен пĕтĕстерсе пĕрлештермелли тата вĕрентсе воспитани памалли процесс пулса тăрать.

Çакă вăл колхозсем таталăнах та аланлăхах çĕнтернине пĕлтерет.

Çакă вăл колхозсемпе совхозсем пĕрлĕ пысăк вăй, пĕтĕм ялхуçалăхĕн тата унăн мĕнпур отраслĕсен кун-çулне татса паракан вăй пулса тăнине пĕлтерет» (çавăнтах, 450 стр.).

Колхоз строĕ тата вăл ялхуçалăхне çĕклени Совет влаçне тĕштырă ыйтăвне татса пама май туса пачĕ. Колхозсем акакан çĕр лаптăкĕ нумай ӳсрĕ, вĕсем пирĕн çĕршыв 1913 çулта туса илнинчен чылай нумайрах тырпул пухса кĕртрĕç. Партин XVIII-мĕш съездĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «Колхозсем таталăнах çирĕпленсе тĕрекленчĕç, хуçалăхăн социализмлă системи вара халĕ пирĕн çĕрĕççинче пĕртен-пĕр форма пулса тăрать», терĕ (çавăнтах, 580 стр.).

Çав съездра Сталин юлташ задача лартрĕ: хамăрăн çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлăн çĕклесе пымалла та кашни çулах 8 миллиард пăт тĕштырă туса илмелле. Пирĕн колхоз хресченĕсем çак задачăна пурнăça кĕртес çул çине çирĕппĕн тăраççĕ. Иртнĕ çулра пирĕн çĕршыв çичĕ миллиард та тăватçĕр миллион пăт тырпул туса илчĕ.

Сталин юлташ социализмлă ялхуçалăхăн плана тăрăшать, унăн кашни утăмне тимлĕ сăнаса тăрать. Сталин юлташ хăй хутшăннипе 1935 çулта колхозникударниксен II-мĕш съездĕнче колхозлă пурнăçăн тĕп законе—ялхуçалăх артелĕн Сталинла Уставне туса хатĕрлесе йышăннă. Сталин юлташ пуçарнипе партин XVIII съезчĕ хыççăн ялхуçалăхне анăçлăн аталантарас ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан чылай решенисем йышăннă. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Колхозсен обществăллă çĕрĕсене салатса пĕтересрен сыхламалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени (1939 ç.), СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февраль пленумĕ ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра аталантарассип çинчен йышăннă решени, çутçанталăка çĕнетсе улăштармалли сталинла план, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана,—çаксем тата партипе правительствăн ытти çавăн пек паха решенийĕсем пирĕн аслă колхоз строительствине çĕнĕ те пысăк вăй-хăват параççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче калама çук историллĕ сăмахĕсенче Сталин юлташ колхоз хресченĕсен патриотла ĕçне пысăка хурса хакларĕ. 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче каланă сăмахра вăл: коллективизаци меслечĕ хресченсен вак хуçалăхĕсене социализмлă шултăра хуçалăха пĕрлештермелли питех те прогрессивлă меслет пулни курăнчĕ, тесе кăтартса пачĕ.

Пирĕн колхозсем халĕ çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тăваççĕ. Мĕнре пулать-ха çав ӳсĕм? Акă мĕнре: колхозсенче обществăллă хуçалăх малалла ӳсет, валеçмелли фондсем ӳсеççĕ, колхоз производствин таварлăхĕ ӳсет, колхоз туфалăкĕ нумай енлĕ хуçалăх пулса пырать. Кунсăр пуçне, ĕçе механизацилесси ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те кĕрсе пырать. Колхозсем пур ĕçсене те, малта тăракан меслетсене, наука кăтартнă пек туса пыраççĕ. Колхозра ĕçе организацилесси лайăхланса пырать, уйрăм специальноçа тăрăх ĕçлесси лайăхланса пырать. Колхозлă ялсенче çĕнĕ обществăллă çуртсем йышланса пыраççĕ. Çаксем пурте колхозлă пурнăçăн çĕнĕ пусăмне кăтартса тăраççĕ.

Сталин юлташ тата партипе правительство колхозсенĕн мĕнле тăрăшнине пирĕн республика вăçал илемлĕн пулăшу пар-уççăн кăтартса парать. Совет правительстви йышăннă тăрăх, республикăна ялхуçалăхĕ 1952 çулта 360 трактор, автомашинăсем, комбайнсем тата ытти нумай машинăсем пулăшу илет. Республикăра уй-хирсенчи мĕнпур ĕçсен 80 процентне мала халĕ машинăсемпе тăваççĕ. Ку ĕнтĕ пирĕн ялхуçалăхĕ техникăпа çăййăн хĕспăшалланине кăтартса парать.

* * *

Ялхуçалăхне аталантармалли социализмлă çул капитализмлă çултан нумай лайăхрах пулнине историллĕ вĕсне вăхăт хушшинчех усăн кăтартса пачĕ. Совет Союзĕнчи колхоз юхăмĕн пĕтĕм тĕнчере пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем Совет Союзĕн опычĕпе анлăн усă кураççĕ.

Вăл çĕршывсенче МТС-сем, государство хуçалăхĕсем тăваççĕ, производство кооперацийĕсем организацилеççĕ. Кооперацин формисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пурнăççен ытла ĕçре çĕнĕ тумалли кооперацин хуçалăх тенен хуçалăхсем нумайрах. Хресченсем çав кооперацие кĕреççĕ те анлăн хăйсен çĕрне тара параççĕ. Хирте пурте пĕрле ĕçлеççĕ, тупăшсене вара кам мĕн чухлĕ ĕçленине тата мĕн чухлĕ çĕр тара панине кура валеççĕ.

Çапла ĕнтĕ, ку хуçалăхсем пирĕн колхозсенчен пачах уйрăлса тăраççĕ, вĕсенче ĕçлемесĕрех килекен тупăш та пур. Анчах вăл çĕршывсенче малтанхи колхозсем те организациленеççĕ ĕнтĕ, вĕсен уставĕ тăрăх, çав колхозсенче ĕçлемесĕр килекен тупăшсене пĕтереççĕ.

Коммунистла тата рабочи партисем ĕç хресченĕсен массисене социализм çулĕ çине куçма майĕпен хатĕрлеççĕ.

Ним иккĕленмелли те çук, Совет Союзĕ пур енчен те пулăшса пынипе халăх демократи çĕршывĕсем хресченсене нумай миллионлă совет хресченĕсем такăрлатнă çулпа анăçлăн илсе пырĕç.

В. ЯКОВЛЕВ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Пурнăçран юлса пымалла мар

«Районсенчи хаçатсем хăйсен тĕп задачине — партипе правительство политикипе мероприятийĕсене пропагандăланă никĕс çинче, вырăнти пурнăçран илнĕ çывăх та колхозниксене ăнланмалла фактсемпе усă курса, ĕçсыннисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас, колхозниксене район умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама организацилес задачăна çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ»—тесе кăтартса пачĕ нумаях пулмасть «Правда» хаçат. Çак кăтарту вăл пирĕн республикăри районсенче тухса тăракан хаçатсене те, пуринчен ытла Октябрьски районĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» хаçата, пырса тивет.

«Хĕрлĕ Октябрь» хаçат (редакторшĕн 1951 çулхи сентябрьтенпех А. Д. Румянова юлташ ĕçлет) район пурнăçне кирлĕ пек тулли, вăхăтра çутатса тăраймасть. Акă, кĕркуннепе хĕллехи сезонти вăрман хатĕрлевĕ çинчен мĕнле çырнине пăхса тухсан, çакна калас килет: хаçат ку ыйтупа пачах çырман темe çук, çыркаланă, анчах пĕтĕмĕшле, сиелтен кăна тата хутран-ситрен çеç çырнă.

Ял Совет исполкомĕсемпе колхозсен правленийĕсен председателĕсен тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсен 1951 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлăвĕнче районти колхозсем Тăван çĕршыва валли вăрман хатĕрлемелли плана 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне, йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли тата турттармалли плана Совет Çарĕ 34 çул тултарнă уяв тĕлне пурнăçлама обязательство илнĕ. Çак ответлă обязательствăна пурнăçлассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен хаçатăн номертен номерех тимлĕ çутатса тăмаллаччĕ, малта пыракансен ĕç опытне сармаллаччĕ, вăрман хатĕрлевĕнче юлса пынин сăлтавĕсене уçса палăртмаллаччĕ, ку ĕçре районти организацисене пулăшмаллаччĕ. Анчах вăл ку енĕпе хăйĕн тивĕçне çителĕксĕр пурнăçласа пычĕ. Хаçат 1951 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕнче «Вăрман хатĕрлевне большевикла организацилер» ятлă умстатья, октябрĕн 11-мĕшĕнче «Звезда» тата «Волгарь» колхозсем вăрман хатĕрлевне пуçăнни çинчен пĕчĕк информацисем пичетлерĕ те, çирĕм кун хушши шарламасăр ларчĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕнче тухнă номерте тин районти «чылай колхозсем вăрман хатĕрлене тытăнманни» çинчен пĕлтерчĕ. Вулакансем çак кун тата тепĕр тĕлĕнмелле хыпар пĕлчĕç: хаçатăн октябрĕн 4-мĕшĕнчи умстатьи «вăрман хатĕрлевне сезонăн малтанхи кунĕсенчех организацилесе тытăннă» тесе ырланă Молотов ячĕпе тăракан колхоз ноябрĕн 1-мĕшĕнчех пĕр колхозника та «вăрман хатĕрлеве кăларса яман» иккен! Кун хыççăн хаçат каллех, уйăх вĕçĕничченех, вăрман хатĕрлевĕ çинчен пĕр сăмах та çырмарĕ.

«Хĕрлĕ Октябрь» хаçат редакцийĕ çакăн пек хăлхаса ларнине мĕнпе ăнлантарса пама пултарĕ-ши? Тен, вăрман хатĕрлесе тата турттарас ĕçсем районта ăнăçлă пулса пынă? Çук, апла мар, пачах урăхла: декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне плана икĕ колхоз кăна пурнăçланă пулнă, чылай колхозсем вăрмана пачах çителĕксĕр ĕçленĕ, Максим Горький ячĕпе тăракан тата «Культура» колхозсем ноябрĕн 29-мĕшĕнчех вăрмана пĕр çын та яман.

Хаçат 1951 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнче «Вăрман хатĕрлес ĕçре пысăк улшăну тăвар» ятлă тепĕр умстатья пичетлесе кăларчĕ. Унта вăл çапла çырать: «Вăрман хатĕрлевĕн ответлă тапхăрĕ пуçланчĕ(!). Çак уйăхри ĕçсем (асăрхăр: уйăх вĕçĕниччен виçĕ кун юлнă!) çулталăкри, сезонти плана тултарассине татса параççĕ». Тата: «Пĕтĕм вăя вăрман хатĕрлев планне çĕнĕ çул тĕлне тултарассишĕн хурар!»—тесе чĕнчĕ хаçат. Паллах ĕнтĕ, виçĕ уйăх хушшинче тăвайман ĕçе виçĕ талăк хушшинче тума çук. Çавăнпа ĕнтĕ хаçатăн сăмахĕсем вăйсăррăн илтĕнеççĕ, вĕсем районти организацисене вăрман хатĕрлевĕнче «пысăк улшăну» тумах пулăшаймасççĕ. Тепĕр [illegible], виçĕ кун хушшинче пиçетри колхозсем хаçата илсе вулама та ĕлкĕреймеççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕн ответлă тапхăрĕ, хаçат çырнă пек, декабрь уйăхĕн вĕçĕнче мар, 1951 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчех пуçланнă. Çĕнĕ çул тĕлне пирĕн республикăра нумай колхозсем, уйрăм районсем те, вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. Хаçат редакцийĕ сезон пуçлансанах вăрман хатĕрлевĕ çинчен тăтăш, тарăн, ыйтăва тĕплĕн тĕпчесе çырса тăнă пулсан, Октябрьски район вăрман хатĕрлевне чылай ăнăçларах организациленĕ пулĕччĕ. Анчах фактсем тепĕр майлă. Район январĕн 25-мĕшĕ тĕлне вăрман касса хатĕрлемелли плана 51 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 72,3 процент, турттармалли плана 46 процент çеç тултарнă. Тĕлĕнмелле, апла пулин те «Хĕрлĕ Октябрь» хаçат кăçал вăрман хатĕрлевĕ çинчен пачах çырма пăрахрĕ.

«Хĕрлĕ Октябрь» хаçат ытти ыйтусене те тивĕçлипе çутатса тăраймасть. Вăл чылай ĕçсем çинчен кая юлса çырать. Сăмахран, хаçат 1951 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче «Пуçламăш парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсем» ятлă умстатья пичетлесе кăларчĕ. Ку статьяра пухусене мĕнле хатĕрленсе ирттермелли çинчен çырнă. Кирлĕ статья, анчах ăна каярах юлса пичетленĕ. ВКП(б) Чăваш обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, пуçламăш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем декабрĕн 10-мĕшĕнче пуçланнă. Ситменнине районти пуçламăш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртни çинчен хаçат уйăх хушши—январĕн 10-мĕшĕччен пĕр материал та памарĕ.

Çакна та палăртмасăр хăварма çук: хаçат парти пурнăçĕ çинчен сахал çырать. ВКП(б) райкомĕн пленумĕпе парти активĕн районти пухăвĕ çинчен çырнисĕр пуçне, вăл юлашки виçĕ уйăх хушшинче парти пурнăçĕ çинчен пĕр статья та пичетлемен.

«Колхозри вулакан кашни номертех хăйĕн районĕнчи, облаçĕнчи, пĕтĕм çĕршыври пурнăç çинчен вуласа курасшăн. Хаçат колхоз массисен сăлкуçĕ пек тапса тăракан активлăхĕпе творчествăллă пултарулăхĕ çинчен, вĕсен ĕçри хастарлăхĕ çинчен çутатса тăтăр, тет вулакан» («Правда»). «Хĕрлĕ Октябрь» хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсен çакна лайăх асра тытмалла, пурнăçран юлса пынине хăвăрт пĕтермелле, пурнăçпа пĕр тан утас пулать.

КОЛХОЗСЕНЧИ ОТЧЕТПА СУЙЛАВ ПУХĂВĔСЕМ

Правлени начар ĕçленĕ

ВĂРНАР. Маленков ячĕпе тăракан колхозра отчетлă пуху пулса иртрĕ. Отчетлă тапхăрти ĕçсем çинчен колхоз председателĕ Г. Смирнов, ревизи комиссийĕсем çинчен ревкомисси председателĕ Г. Федоров юлташсем докладсем туса пачĕç.

Колхоз районта чылай ĕçсемпе юлса пырать. Тырпул, техникăллă культурăсен, пахча çимĕç, çĕрулми тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Иртнĕ çул колхоз пĕр ялхуçалăх культури тăрăх та плана тултарайман.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерейменни колхоз руководителĕсем агрономи науки вĕрентнĕ пек ĕçлессине организацилеменнинчен килет. Акă пĕлтĕр уя 14 пин лав ытла тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, 2 пин лав ытларах кăна кăларнă. Минераллă удобренисем те питĕ сахал тунă. Кĕрхи тырă калчисене çуркунне сахал сӳреленĕ, апат çителĕксĕр панă. Çуллахи вăхăтра тырпул пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

В. Александров, Л. Васильева, И. Абрамов колхозниксем артели руководителĕсене авăн çапас ĕçе вăраха яни, пысăк тăкаксем туни, кĕрхи тырăсене кая юлса акни çинчен хытă асăрхаттарчĕç, малашне çавнашкал йĕркесĕрлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерме кирлине асăрхаттарчĕç.

МТС колхозпа тунă договорта кăтартнă чылай ĕçсене ирттерсе пурнăçланă. Анчах вăл пахалăхшăн начар кĕрешнĕ, нумай ĕçсене кирлĕ вăхăтра туман.

Тухса калакансем колхозра ĕç дисциплини япăх пулни çинчен нумай чăрмăсç тăчĕç. Правлени членĕсемпе бригадирсем колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилеме тăрăшмаççĕ. Çуллахи вăхăтра ĕç кунĕ 5—6 сехет çеç тăсăлни те сахал мар пулнă. Бригадирсем колхозниксен ĕç кĕнекисем çине ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пымаççĕ. Бригадăсем правлени панă нарядра чылай чухне пурнăçламасăрах хăвараççĕ.

Дисциплина япăх пирки колхозран 200 çынна яхăн хăйсен ирĕкĕпе урăх çĕре ĕçлеме тухса кайнă. Пĕлтĕр чылай колхозниксем ĕçкунĕсен минимумне тултарайман. 1948 çулта минимума тултарайманнисен хисепĕ 12 çын пулнă пулсан, 1951 çулта 88 çынна çитиччĕ ӳснĕ.

Колхоз правленийĕ укçа-тенкĕ тупăшне ӳстермелли майсемпе те усă курмасть.

— Пирĕн çăм тапмалли икĕ машина пур. Вĕсенчен 17 пин тенкĕ тупăш курма пăхнă пулсан, виçĕ пин тенкĕ ытларах кăна тупăш курнă. Вĕсене çителĕксĕр ĕçлеттернĕ. Çил арманĕсем те юсав мар. Автомашинăпа ĕçлесе те çулталăк хушшинче 1.490 тенкĕ çеç тупăш илнĕ,— тет Н. Степанов колхозник.

Обществăллă хуçалăха вăйлатма тăрăшманшăн колхозниксемпе колхозницăсем колхоз правленине хытă критикăларĕç, артель правленийĕн председателĕ Г. Смирнов колхоза ертсе пыма пултарайманнине палăртрĕç, ревизи комиссийĕ хăйĕн ĕçне сиелтен, ячĕшĕн кăна тунине уçса парĕç. Ревизи комиссийĕ правлени ĕçне тĕрĕслесе пыман, унăн ĕçĕпе çураçса пурăннă, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене хирĕç кĕрешмен. Пухура пулнисем ревизи комисси ĕçне начар тесе йышăнчĕç.

Юлашкинчен колхозниксем колхоз председательне тата правлени составĕпе ревизи комисси составне çĕнĕрен суйласси çинчен ыйту кăларса тăратрĕç. Вĕсем ку ыйтăва тарăннăн шухăшласа пăхса тухма тăрăшрĕç. Правлени составне колхоз производствинче хастарлă ĕçлекен, обществăллă хуçалăха аталантарассишĕн тăрăшакан колхозниксене 9 çынтан суйларĕç. Колхоз председательне Вăрнарти зооветтехникумра вĕреннĕ И. Кузьмин юлташа суйларĕç.

Колхозниксем правленин çĕнĕ составне колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетме, кăçал кашни гектартан çĕр пăтран кая мар тĕштырă туса илме, фермăсене çирĕплетме, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăçлăха ӳстерме, фермăсенчи чылай ĕçсене механизацилеме, колхозăн производство планне тĕрĕс пурнăçласа пыма хушса хăварчĕç.

С. ФЕДОТОВ.

Вăрман хатĕрлевĕ

Первомайски вăрманпромхоз мĕншĕн юлса пырать

«Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан Первомайски вăрманпромхоз 1950-мĕшпе 1951-мĕш çулсенче производство планне тултарман. Вăл икĕ çул хушшинче Тăван çĕршыва 70 пин кубометр йывăç парса çитереймен. Ку уйăхра та вăрманпромхоз япăх ĕçлет.

— Пирĕн вăрманпромхоза организацилленĕренпе вăхăт нумай иртмен-ха. Механизмсем сахал,—тет вăрманпромхоз директорĕ Наумов юлташ ĕç юлса пыни çинчен сăмах хускатсан. Фактсем вăл тĕрĕс мар калание кăтартаççĕ. 1951 çул пуçламăшĕнче вăрманпромхоз икĕ ПЭС-12 электростанци туяннă. Ку электростанцисем çур çул ытла ахаль тăнă. Мĕншĕн? Кадрсем вăхăтра вĕрентсе хатĕрлеменнипе. Пĕлтĕр вăрманпромхоз электропăчкăсемпе йывăç касса хатĕрлемелли плана 26 процент çеç тултарнă.

Каснă йывăçа турттарса кăларма автомашинăсем çителĕклĕ. Вĕсем пурте çĕнĕ, 1950—1951 çулсенче çеç туяннă. Апла пулин те вĕсемпе лайăх усă курмаççĕ. Вăрманпромхоз автомашинăсемпе йывăç турттармалли плана уйăхран-уйăха тултармасть. Пĕлтĕр вăл механизмсемпе плана палăртнинчен 8 пин кубометр ытла йывăç сахалтарах турттарса кăларнă. Ку уйăхра автомашинăсемпе йывăç турттарасси тата чакнă. вăрманпромхоз кулленхи задание çуррине те тултараймасть. Çакă вăл мĕнрен килет-ха? Автомашинăсене шофер ĕçне лайăх вĕренсе çитмен çынсене шанса панинчен, шоферсен квалификацине ÿстерме тăрăшманнинчен килет. Шоферсем хушшинче автомашинăсене лайăх пăхса усрассишĕн тата лайăх ĕçлеттерессишĕн социализмлă ăмăрту сарман.

Дирекци çулсене юсаттарма тăрăшмасть. Япăх çулсем тăрăх çÿренипе машинăсем хăвăрт пăсăлаççĕ. 1951 çулта автомашинăсем юсанă çĕрте пĕтĕмĕшпе планпа палăртнинчен икĕ хут ытларах ларнă. Пĕренесене тиесе пушатассине йĕркелеменнипе шоферсен ĕç тухăçлăхĕ чакать.

Коллективра малта пыракан шоферсем сахал мар. Дирекципе рабочком стахановецсен опычĕне пĕтĕçтермеççĕ, коллектив пуçарулăхне ÿстерме тăрăшмаççĕ. Вăрманпромхоза организациленĕренпе икĕ çулталăк ытларах иртрĕ. Çак тапхăрта ĕçе çĕнетсе лайăхлатмалли рационализаторла сĕнÿсем пачах пулман. Вăрманпромхозăн главнăй инженерĕ Гуляев юлташ рабочисемпе мастерсен техникăлă пĕлĕвне ÿстерме тăрăшмасть: курссем е кружоксем организацилемен, лекцисем, семинарсем ирттермест.

Вăрманпромхозра Первомайски, Чкаловски тата Шăлеĕ районĕсенчи колхозниксем йывăç хатĕрлеççĕ. Вăрманпромхоз руководителĕсем колхозниксене ĕçе тĕрĕс йĕркелеме, малта пыракансен опычĕпе паллаштарма пулăшмаççĕ. Мастерсемпе бригадирсем колхозниксен ĕçне [illegible]. Хатĕрленĕ йывăçа вăхăтра йышăнмаççĕ. Турттарса кăларнă пĕренесене купалама вырăн хатĕрлесе хуманнипе е пĕр вырăнта лавсем нумай пухăнса тăнипе лавçăсем сехетшер ахаль тăраççĕ.

Колхозниксем Кивĕ Эйпесре, Паснарпусĕнче тата ытти ялсенче пурăнаççĕ. Колхозниксем патне хаçат-журналсем илсе пымаççĕ, вĕсене кино кăтартмаççĕ. Вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Косойкин юлташ колхозниксем хушшинче массăллă-агитациллĕ ĕçе йĕркелеме тăрăшмасть. Вăл ВКП(б) райкомĕсем уйăрса янă агитаторсене, коммунистсемпе комсомолецсене пухса канашлусем ирттермест, вĕсене массăллă ĕçĕн планне тума, калаçусем ирттерме пулăшмасть. Колхозниксем хушшинче докладсемпе лекцисем ирттермеççĕ. Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене кам мĕнле пурнăçланине, социализмлă ăмăрту мĕзле пынине тĕрĕслемеççĕ.

Шăлеĕ районĕнчи колхозниксем вăрманпромхозра пĕрремĕш çул ĕçлеççĕ. Çавăнпа чылайăшĕ вăрман участокне е пурăнмалли яла шыраса вăхăт нумай ирттереççĕ. Вăрманпромхозăн колхозниксене Кире станцийĕнче кĕтсе илме тата ĕçатса яма йĕтарласа пĕр çын уйăрса лартмалла пулнă.

Вăрманпромхоз дирекцийĕ, рабочком тата партбюро ĕçе тĕрĕс организацилеме, социализмлă ăмăртăва сарма тăрăшманнипе çакăнтан лайăх курма пулать: 1951 çулта кадрти рабочисенчен 80 процентĕ ĕç нормине тултарайман. Уйрăмах колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккине палăртма пулать. Вăрманпромхоз дирекцийĕн сведенийĕсем тăрăх, йывăç касса хатĕрлекен колхозниксем ĕç нормине вăтам шутпа 33 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухакан лавçăсем—37 процент, турттарса кăларакан лавçăсем—53 процент çеç тултараççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккипе ăнтă вăрманпромхоз çулне çирĕплетнĕ районсем йывăç хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пыраççĕ.

Вăрманпромхоз руководителĕсем, уйрăмах Наумовпа Гуляев юлташсем пĕрмай пĕрне-пĕри [illegible] ĕçлемеççĕ. Çак çитменлĕхе коллектива мобилизацилеме, унăн пуçарулăхĕпе пултарулăхне йĕркелеме кансĕрлет «Чăвашвăрман» трест Первомайски вăрманпромхоз чылайранпа юлса пыни тата ун ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен пĕлмест теме çук. Унта чылайччен трест управляющийĕн заместителĕ Хохлов юлташ пурăннă. Анчах вăл вĕсене çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ пек пулăшман. Трест управляющийĕ Киргин юлташ та вăрманпромхоз юлса пынине пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

ВКП(б) Первомайски райкомĕпе райсовет исполкомĕ вăрманпромхоз ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. Вĕсем вăрманпромхоз руководителĕсене районсемпе колхозниксен пурăнăçпа тата культура ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерме, массăллă ĕçе йĕркелеме илĕп пулăшаççĕ.

Первомайски вăрманпромхозĕ юлса пынине пĕтерес пулать. «Чăвашвăрман» тресчĕн, Первомайски райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн вăрманпромхоза халичченхинчен ытларах пулăшмалла.

И. ИВАНОВ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисенчен нумайăшĕ 1951 çулхи ĕç нормине ирттерсе тултарнă. Халĕ вĕсем çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: II-мĕш сборочнăй цехри П. Т. Григорьев слесарь. Вăл иртнĕ çулхи ĕç нормине 358 процент тултарнă, январь уйăхĕнчи задание те чыслă пурнăçланă.

В. АЛЕКСЕЕВ фотоÿкерчĕкĕ.

Гектартан 120 пăт тĕштырăшăн

Агротехника правилисене çирĕппĕн пурнăçласа, пирĕн колхоз членĕсем уйхирте çулсерен тухăçлă тырпул çитĕнтереççĕ. Иртнĕ çул кашни гектартан 17-шер центнер ялан тырă пуçтарса кĕртнĕ. Колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана та ирттерсе тултарнă. Иртнĕ хуçалăх çулĕн итогĕсем халĕ кашни колхозника савăнтараççĕ.

Анчах ку çитĕнÿсем пире çырлахтармаççĕ-ха. Кăçалхи ĕмĕтсем тата пысăкрах. Артель членĕсем 1952 çулта тырпул тухăçлăхне пур культурăсен енĕпе те чылай ÿстерме, ситес çуртине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илме пулчĕç. Пирĕн колхозниксен сăмахĕ—çирĕп сăмах, вĕсем ăна пурнăçласшăн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ.

Эпир кăçалхи çуртине планне иртнĕ кĕркунех хатĕрлерĕмĕр. Ăна бригадăсенче сÿтсе явнă хыççăн пур бригадăсемпе те ăмăрту договорĕсем хатĕрлерĕмĕр. Хаçатăн тупăшĕсем П. Яковлев, [illegible] Федоров, А. [illegible] тимĕрçĕсем çĕрне-кунне тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем çĕнĕ çул тĕлне 25 плуг, 4 сеялка, 70 сÿре [illegible] Ваша [illegible] колхозник П. Стратонов юлташ тĕплĕ юсать.

Иртнĕ çулхи пекех, артель кăçал та сортлă вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлерĕ. Нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăк вăрлăхĕсем те планра кăтартнă чухлĕ пур. Кăсал колхоз вунă гектар ÿй çине куçать. Вăрлăхсене [illegible] трактор тата «ВВН» машинăпа сортласа тасатрăмăр. Вăрлăхсене сортлас ĕçре электричество вăйĕпе усă куртăмăр. Вăрлăх пахалăхĕ лайăх, [illegible] йышăнмалла пулнă.

Кăнтăр колхоз руководителĕсем, çуракине ĕçсене МТС вăйĕпе тăвасси çине шанса, [illegible] хăйсен ĕçне пахалăхлă тумассăр [illegible]. Ку тĕрĕс мар. Эпир кашкăрсене ĕлĕкренех çуракинчен [illegible] туя [illegible] тавассишĕн халех çине çĕрсе [illegible] Лашасем—çуракине пысăк вăй. Пирĕн вăл районă С. Иванов юлташ лашасене лайăх илсе [illegible] пăхать.

[illegible] тăрăх. Вăрмантан тавăрăннă хыççăн, март уйăхĕнче, лашасене йывăр ĕçе кÿлме чарăпăр, апат кушса парапăр. Уя валли пирĕн утă-улăм, концентратсем çителĕклĕ.

Кăçал эпир уй-хире вырăнти тата минераллă удобренисем ытларах кăларма шутлатпăр. Вĕсене усă курни тырпул тухăçлăхне ÿстерме май парать. Халĕ кашни колхозник вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе активлă хутшăнать. Удобренисем хатĕрлеме колхоз правленийĕ выльăх-чĕрлĕх фермисене те задани панă. Халĕ уйăх хушшинче уй-хире тăватă пин лав таслăн [illegible]. 60 центнер [illegible] тислĕк. 40 центнер кĕл пухрăмăр. [illegible] кута туса çĕртетпĕр.

Вăлах тырпул туса илессипе республикăра малта пыракан Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕллĕ [illegible] колхозăн пахалăхне [illegible] тырăсене, минераллă удобренисем те пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах [illegible] пуллатпăр. Халĕ вĕсене 200 центнер ытла кÿрсе килнĕ.

[illegible] [illegible] тăрăхсем [illegible] [illegible] кашни бригадăра колхозниксен [illegible] уйăрнă, вĕсене [illegible] [illegible] çирĕплетсе панă.

Кăçал [illegible] тытас. [illegible] тăпра çине [illegible] хатĕрлес ĕçсене те лайăх йĕркелерĕмĕр.

Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем пайлă [illegible] ĕçре малта пыраççĕ. Пуçламăш парторганизаци (секретарĕ А. Артамов юлташ) партин обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçлама колхозниксене мобилизацилет.

Пирĕн умра тăракан задача—çуракине тĕплĕн хатĕрлесе, кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 120 пăтран кая мар [illegible]. 400 центнер [illegible] [illegible] туса илессе, ытти [illegible] культурăсен тухăçлăхне ÿстерессе пулать.

Ф. САПАРКИН,
Вăрнар районĕнчи «Хĕрлĕ Мĕтне» колхоз председателĕ.

102 çулхи колхозница

ВАРНАР. [illegible] «[illegible]» колхозра 102 çулхи Матрена Терентьевна Туйкина колхозница пурăнать. Вăл хăйĕн хĕрĕ Васса патĕнче пурăнать. Васса 50 çула çитнĕ, унăн 8 ача. Вĕсем пурте колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ.

М. Туйкина 102 çула çитнĕ пулсан та лайăх курать, ăнан илтет, сывлăхĕ те лайăх.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Критикăпа библиографи

А. Алга сăввисен çĕнĕ сборникĕ

Çак кунсенче Александр Алга поэтăн «Çуралнă çĕршывра» ятлă сăвăсен сборникĕ пичетленсе тухрĕ. Сборникре поэтăн Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн юлашки 5—6 çул хушшинче çырнă сăввисемпе поэмисем кĕнĕ.

Сборник пирĕн юратнă çулпуçăмăрсене—Аслă Ленинпа Аслă Сталина сума суса çырнă сăвăсен ярăмĕпе уçăлать. Çакă ĕнтĕ пирĕн кашни совет поэчĕн йăлана кĕнĕ паха традицийĕ пулса тăчĕ. Ленинпа Сталин сăнарĕсене çырса кăтартасси—ответлă та пархатарлă ĕç. А. Алга ку тĕлĕшпе хăй умне лартнă задачăна лайăх пурнăçланă. Акă, пирĕн умра «Аслă çулпуçсем çинчен» ятлă сăвă. Сăвăн лирикăллă геройĕ Май уявĕнче, хăйĕн пĕчĕк хĕрне йăтса, трибуна умĕн иртет. Хĕрача икĕ аслă çыннăн портречĕсене палласа илет. Вĕсем — Ленинпа Сталинăн портречĕсем. Çакăн хыççăн поэт хĕрачана Ленинпа Сталин çинчен, вĕсен историллĕ аслă ĕçĕсем çинчен каласа кăтартать.

«Эс—пĕчĕккĕ. Паллан çеç халĕ.
Кайран сана вĕсем çинчен
Кун-çул та, кĕнеке те калĕ,
Пурне те пĕлĕн-ха ÿссен».

А. Алга аслă çулпуçсен сăнарĕсене çутатса панă чух хăйне евĕрлĕ меслепе усă курнă.

«Пирĕн хĕвел», «Сталина салам», «Октябрь», «Çутă уяв», «Çĕнтерÿ кунĕ», «Сталинла Конституци хĕвелĕ», «Суйлăв синчен» ятлă сăвăсенче те аслă çулпуçсемпе вĕсен ĕçĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ.

В. И. Ленинпа И. В. Сталин çинчен çырнă сăвăсен воспитаниллĕ пĕлтерĕшĕ пысăк. Вĕсем çулпуçсене юратма, Ленин—Сталин ялавне çирĕп тытса пыма вĕрентеççĕ.

Александр Алга поэтăн вăрçă хыççăнхи творчествинче мирлĕ пурнăç кĕвĕнсем хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Тĕслĕхрен, «Эпир мирлĕ пурнăçшăн» сăвва илер. Сăвă иртнĕ вăрçăн хăрушлăхĕсемпе асапĕсене кăтартнинчен пуçланать. Тăшмана çĕнтерĕ хыççăн, ĕнер çапăçу хирĕнче Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, чысĕшĕн, телейĕшĕн, мирлĕ пурнăçшăн пуçĕсене хĕрхенмесĕр çапăçнă совет салтакĕсем, «этем ырă куртăр» тесе, паян çуртсем тăваççĕ, йывăçсем лартаççĕ. Анчах океан леш енчи Уолл-стритăн урнă йыттисем вара «этем юнĕпе ÿтĕнчен ытти кăларни» ĕмĕтленсе сутăраççĕ. Çав ирĕкрен тăпласăр ĕмĕтне эпир, совет çыннисем, хастар ĕçпе, телейшĕн, миршĕн кĕрешÿпе пĕчлантарăпăр.

Халăхри вăхăтра Америкăри ниĕсен империалистсем, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн ялавĕпе уттавăн витĕнсе, Корейăра тискер ĕçсем тăваççĕ. «Салам Корея халăхне» сăвăра А. Алга Америкăри сĕмсĕр империалистсен пуçкасан çарĕсен хăрушă ĕçĕсене кăтартса парать.

«Тусăмсем» ятлă сăвăра та поэт ĕнерхи çĕнтерÿçĕ совет воинĕсен паянхи мирлĕ ĕçĕсене кăтартса парать. Пĕри—Уралта—çĕршыва хăтнĕ хурçă ытларах парасшăн тăрăшать; тепри—Армени çынни—чаплă ĕçсемшĕн Мускавра пулма тивĕç илнишĕн савăнать; виççĕмĕшĕ—Украина хĕрĕ—«ылтăн тырă юратса ÿстерет».

«Çурăх Атăл çинче» сăввинче А. Алга коммунизмăн аслă стройкисене тума Сталинградăн, Атăлпа Дон хушшине ĕçлеме килекен çамрăксен сăнарĕсене кăтартать. «Атăлпа ыйхă чух», «Совет çынни» сăвăсем те çак темăпах çутатаççĕ. «Совет çынни» сăвăри совет çыннин сăнарĕ — вăл пĕтĕм совет халăхĕн сăнарĕ. Сăвăра поэт совет халăхĕн историллĕ кун-çулне, унăн паттăрлăхне, пуçарулăхне туллин кăтартса парать.

Вырăссен аслă писателĕ А. М. Горький ирĕклĕ те вăйлă çыншăн кĕрешнĕ. Чăвашсен революцичченхи талантлă поэчĕ К. В. Иванов та: «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен: шывсем çинче, çĕр çинче хуçа пулса вăл тăрать»,—тенĕ. Анчах революцичченхи саманара çав «вăйлă этемĕн хăй тĕнчине пăхăнма» тивнĕ: патша саманн ăна чура вырăнĕнче тытса усранă. Октябрьти революци хыççăн совет çыннисем хăйсен шăпине хăйсен аллине илчĕç, пурнăç хуçи пулса тăчĕç. Пирĕн сталинла саманари совет çыннисем çинчен çапла çырать поэт:

«Çутçанталăк вăйлă та хăватлă,
Анчах çын унран та вăйлăрах.
Çут Октябрь çулĕмĕ çуратнă
Çын вăйĕ çĕр хут та пысăкрах»
(65 стр.).

Колхозлă ял, çутçанталăк епле çĕнелсе, улшăнса пынине эпир «Умри сăнсем» ятлă сăвăсен циклĕнчи сăнсем урлă куратпăр. Кунта автор Отечественнăй вăрçă хыççăнхи ял пурнăçне, колхозниксен мирлĕ ĕçĕсенчи çитĕнĕвĕсене çырса кăтартать.

Кĕнекере пичетленсе тухнă сăвăсенчен чылайăшĕ совет çамрăкĕсен пурнăçĕпе ĕçне, шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене, кăмăлĕпе юратăвне çутатса парать («Юрă», «Ĕмĕтсемпе ĕçсем», «Юрату», «Касрăм Атăл урлă», «Юратсан», «Хĕрсем вăйя тухаççĕ»).

«Кĕвентеллĕ хĕр» баллалăпа вулакан сборник тăрăх пĕрремĕш хут паллашать. «Шывармане» баллалăри пекех ку балладăн сюжетне те автор халăх юмахĕнчен илнĕ: вăл—кĕвентеллĕ хĕр епле уйăх çине кайни. Çавăн урлă поэт чăваш çамрăкĕсен ĕлĕкхи йывăр та хăрушă, телейсĕр пурнăçне паянхи совет çамрăкĕсен пурнăçĕпе танлаштарса кăтартать; вулакана ĕлĕкхи тискер саманана курайми пулма, ирĕклĕ те телейлĕ социализмлă пурнăça юратма, ушăн кĕрешме вĕрентет. Баллала хăйĕн идейипе çеç мар, художествăллă формипе те паха произведени пулса тăрать.

Сборник «Полк ялавĕ» поэмăпа вĕçленет. Поэмăра автор Волгин офицер сăнарĕ урлă совет воинĕсен иртнĕ вăрçăри патриотизмне, вĕсен виçĕмсĕр ĕçĕсене çырса кăтартнă. Калас пулать, поэмăна автор «Ялав» журналра (№ 11, 1948 ç.) пичетленсе тухнă хыççăн чылай юсанă, çĕнетнĕ.

Юлашкинчен, çакна каламалла. Александр Алга пирĕн социализмлă пурнăçăн пур енĕсене те курча тăрăшнипе тата совет çыннин сăнарне туллин, ĕнентерÿллĕн кăтартса пама тăрăшнипе куратпăр. Пурнăçра пулса иртнĕ событисемпе явленисене çеç мар—пулассине те, совет çыннин паянхи ĕçĕпе ĕмĕчĕсене çеç мар—ыранхине, малашнехине те реализмла кăтартса парас çулпа пырать вăл.

А. Алга сăвă техникине çирĕп пĕлет, çапах та хăйĕн произведенийĕсене вăл пĕрре пичетлесе кăларнă хыççăн та юсасах, çĕнетсех пырать. Ăна эпир сборникре тухнă сăвăсемпе поэмăсенчен те лайăх куратпăр. Çавăнпа та А. Алга сăввисен художествăллă пахалăхĕ пысăк.

Сборникри сăвăсемпе поэмăсем Александр Алган пултарулăхĕ татах ÿссе, çирĕпленсе пынине кăтартса параççĕ.

Н. ЛЮБИМОВ.

Д. И. МЕНДЕЛЕЕВ

(Вилнĕренпе 45 çул çитнĕ тĕле)

Тĕнчери наукăпа культурăн аслă деятелĕсем хушшинче Дмитрий Иванович Менделеев ячĕ хисеплĕ вырăнта тăрать. Вăл нумай енĕпе ĕçленĕ ученăй-новатор пулнă. идеализма. метафизикăна хирĕç тата наукăна кураймасн çынсене хирĕç хастарлă кĕрешнĕ, аслă патриот пулнă, тăван çĕршыва ырăх кÿме хăйĕн пĕтĕм пурнăçне панă—çавăн пек пулнă ĕнтĕ аслă вырăс халăхĕн талантлă ывăлĕ.

Менделеев аллă çул хушши наукăра ĕçлени, унăн чаплă открытийĕсемпе пысăк ĕçĕсем, философи тĕлĕшĕнчен пити те таран идейисем, вăл естествознанипе техникăн тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх çырнă классикăллă кĕнекисемпе статьисем наукăпа культурăна малалла аталантарма нумай пулăшнă. Ку чухнехи физикăпа хими Менделеевăн гениллĕ ĕçĕ—хими элеменчĕсен периодла законĕн никĕсĕ çинче аталанса пыраççĕ.

Д. И. Менделеев XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри пайĕнчи малта пыракан вырăс çыннисен мухтавлă ăрăвĕнче пулнă, çак ăру пирĕн çĕршыв историне «шестидесятниксем» ятпа кĕрсе юлнă. Вырăссен революциллĕ демократĕсем — Белинский, Герцен, Чернышевский — идейисенчен воспитани илсе, вырăс общество аталанăвĕн ÿссе пынă обстановкинче, çак ăру наукăра, искусствăра, литературăра ĕмĕртен ĕмĕре пыракан паллă открытисем туса, чаплă произведенисем çырса, этемлĕх культурине пуянлатнă, вырăс наукин, искусствин тата литературин чапне малала сун çÿле çĕкленĕ.

Менделеевпа пĕр вăхăтра хăйсен ĕçĕпе чапа тухнă çынсем нумай пулнă: А. М. Бутлеров, И. М. Сеченов, С. П. Боткин, Н. Н. Бекетов, Н. Н. Кокшаров, А. П. Бородин, М. А. Балакирев, М. П. Мусоргский, Н. А. Римский-Корсаков, П. И. Чайковский, В. В. Стасов, И. Е. Репин тата ытти те. Вилĕмсĕр открытисем туса, ытçан сÿнми произведенисем çырса, вĕсем вырăс генийĕн аслă вăйне, вырăс халăхĕн пысăклăх творчество пăй-хăватне пĕтĕм тĕнчене кăтартса панă.

Д. И. Менделеев 1834 çулхи февральте Тобольск хулинче çуралнă. Гимназирен вĕренсе тухсан Петербургри тĕп педагогика институтне вĕренме кĕнĕ, кунта вырăссен паллă ученăйĕсем А. А. Воскресенский, М. В. Остроградский, С. С. Куторга тата ыттисем ертсе пынипе вăл çутçанталăка тĕпчекен наукăсене тĕплĕн вĕреннĕ 1855 çулта Менделеев институтран ылтăн медальпе вĕренсе тухнă, тепĕр çултан Петербург университетĕнче магистр пулма экзамен панă.

Часах, ун чухнехи йĕркепе, çамрăк ученăя «наукăсене лайăхрах вĕренме» ют çĕршыва командировкăна янă.

Менделеев ют çĕршыва пысăк плансемпе тухса кайнă. Вăл Гейдельберг хулинче Бунзен профессор лабораторийĕнче хăй вăхăтĕнчи физикăпа химире чи паллă вырăнта тăнă ыйтăва татса пама—шĕвексенчи молекулăсен çыхăнăвĕ вăйĕн пысăкăшне пĕлме ĕмĕтленнĕ. Анчах Дмитрий Ивановичăн часах ÿкĕнмелле пулнă. «Ку лабораторире мана кирли нимĕн те çук,—тесе çырнă вăл,—тарасисем те пулин ытла та начар... Ку лабораторин пĕтĕм ĕçĕ шкул пĕлĕвĕн шайĕнче çеç тăрать: ĕçлекенсем нумай, тин ĕçе тытăнакансем».

Хăй укçипе кирлĕ приборсем туянса, Менделеев хăйĕн хваттерĕнче пĕчĕк лаборатори тăвать, кунта вăл наука тĕпчевĕсене туса ирттерет.

Менделеевпа пĕрле кунта хăйсен наука темисем тăрăх вырăссен ытти çамрăк ученăйĕсем те ĕçленĕ. Вĕсем çирĕп туслашнă, вырăссен кружокне организациленĕ, ăна Менделеев, Бородин тата Сеченов ертсе пынă. Кружок наука ĕçĕсемпе кăна чăрăнса тăман. Кунта вырăс пурнăçĕн куллень ыйтăвĕсене сÿтсе явнă, Герцен кăларса тăнă «Колокол» журнала вуланă, кружок членĕсем вырăс культурине вăйлатассишĕн активлă кĕрешме хатĕрленнĕ.

1861 çулăн пуçламăшĕнче Петербурга таврăнсан, Менделеев «Органически хими» ятлă чаплă учебник—тата химие технологи çинчен чылай ăменесен çырать. Тепĕр икĕ çултан, технологи институтĕн профессорĕ пулнă чухне, Менделеев студентсене вĕрентнĕ хушăрах доктор пулма диссертаци хатĕрлеме пуçлать: «Спиртпа шыв пĕрлешни çинчен» ятлă классикăллă произведени çырать, çак диссертацие вăл 1865 çулта питĕ лайăх хÿтĕлет. Менделеев часах Петербург университечĕн пĕтĕмĕшле хими кафедрине ĕçлеме куçать. Çак вăхăтран унăн наукăри хĕрÿ ĕçĕ пуçланать.

Менделеев «Хими никĕсĕсем» ятлă хăйĕн чаплă учебникне çырать. Çав учебнике çырнă чух аслă ученăй периодла закон çинчен пĕлнĕ, ку открыти унăн ячĕ вилĕмсĕр мухтав кÿнĕ.

Ун чухне хими элеменчĕсенчен 60 элемента пĕлнĕ. Çав элементсен свойствисене тĕпчесе тата танлаштарса пăхса, Менделеев атом йывăрăшне кура вĕсен свойствисем улшăнса пынинче законлă çыхăну пуррине пĕлнĕ. 1869 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Менделеев хăй тĕллĕн тĕпчесе пĕлнин результачĕсене таблица туса кăтартнă, ăна вăл «хими элеменчĕсен периодла системи» тенĕ. Менделеев периодла система çинчен пичетлесе кăларнă статьясем хушшинче «Хими элеменчĕсен периодла законĕ» ятлă статья уйрăмах паллă пулнă. Атом йывăрăшне пура элементсен свойствисем периодла пулнине çĕнĕ кăтартса парса, Менделеев хăйĕн открытине пула наукăра çĕнĕ вывод тунă, çавăнпа, çав вăхăтра хăшпĕр элементсен валли тĕрĕс мар йышăннă атом йывăрăшĕсене тÿрлетнĕ. Уйрăмах çакă паха: вырăссен аслă химикĕ ун чухне наука пĕлмен чылай элементсем пуррине тата вĕсен свойствисене те кăтартса панă.

Менделеев хими элеменчĕсен периодла законĕ çинчен пичетлесе кăларнă произведенийĕсене никам та асăрхаман. Ют çĕршывсенчи ученăйсем Менделеев тунă çĕнĕ открытие юри асăрхасшăн пулман. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри, сăмахран, Лотар Мейер «çакăн пек тĕрĕслĕх никĕс çинче пĕр-пĕр вывод туни вăхăтсăр», тенĕ.

Анчах аслă открыти авторĕ, хăйĕн çывăх малашнесем пуласшăнне, çĕр çинче сайра тĕл пулакан элементсен атом йывăрăшне пĕлес тĕлĕшпе аслă сăмахсен туса ирттерет, хăй законĕн уйрăм пайĕсене тĕрĕслет.

Менделеев наукăра тăнлăн ĕçлесе, хăйĕн открытине хÿтĕлесе хăварнă тата çак закона хирĕç пыракан фактсем пурте йăнăш пулнине кăтартса панă. Çав ĕнтĕ аслă ученăйăн наукăри паттăр ĕçĕ пулнă, ун çинчен Ф. Энгельс хăйĕн «Çутçанталăк диалектики» ятлă произведенийĕнче палăртнă.

Менделеев малтанах гениллĕ курса тăнин тĕрĕс пулнине наука часах кăтартса панă. 1874 çулта Менделеев малтанах кăтартса панă çĕнĕ элемента—экаалюминие тупнă, ăна галлий тенĕ. 1880 çулта ученăйсем Менделеев кăтартса панă тепĕр элемент—экабор (скандий), 1886 çулта—экакремний (германий) тупнă. Кунта çакна палăртас пулать: çак открытисен авторĕсем, Менделеевăн периодла законĕ çинчен пĕлмен пирки, çĕнĕ элементсен свойствисем çинчен тĕрĕс каласа пама пултараймăн. Д. И. Менделеев тунă хими элеменчĕсен периодла системи вĕсен йăнăшне тÿрлетме май панă.

Наука аталанса пырас ĕçре периодла закон калама çук пысăк вырăнта тăрать. Сталин юлташ хăйĕн «Анархизм е социализм» ятлă классикăллă произведенийĕнче периодла закон çутçанталăк историйĕн диалектикăллă характерне кăтартса пани çинчен каланă. «Менделеевăн «элементсен периодла законĕ»,—тесе çырнă Сталин юлташ,—хисепĕ тĕлĕшĕнчи улшăнусенчен качествăллă улшăнусем пулса кайни çутçанталăк историйĕнче мĕнле пысăк вырăнта тăнине кăтартса парать».

Ученăйсем, Менделеевăн периодла законĕпе усă курса, нĕсĕк вăхăтрах физикăпа химире калама çук пысăк çитĕнÿсем тунă. Радиоактивлăх, материал тытăмĕ енĕпе тунă çĕнĕ открытисене пурне те çак законпа усă курса тунă. çав открытисем ку законпа пур çĕрте те усă курма юраннине, вăл çав тери пысăк вырăнта тăнине кăтартса панă. Менделеев пĕтĕм тĕнчипе паллă ученăй пулса тăнă. Унăн «Хими никĕсĕсем» ятлă классикăллă учебникне нумай чĕлхесем çине куçарнă, вăл халĕ те химие вĕренме чи паха учебник пулса тăрать.

Ют çĕршывсенче Менделеев тунă открытие хăйсем тунă теме хăтланакансем те пулнă. Вырăс ученăйĕ ку открытие хăй тунине татăклăнах кăтартса парса, вырăс наукин чысне хÿтĕлесе хăварнă. Вырăс открытине хапсăнакансен сăмахĕнче нимĕнле чăнлăх та çуккине часах пурте курнă. Нимĕç шовинисчĕсемпе вĕсен хÿреткисем кăна çине тăрсах çак открытие Менделеевпа пĕр вăхăтрах Л. Мейер тунă теме хăтланнă.

Менделеев нефтьпе çĕр кăмрăкне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе те паха ĕçсем тунă. Вăл çĕршывăн руда запасĕсене тата вĕсемпе усă курмалли меслетсене тĕпченĕ, метеорологипе, геофизикăпа интересленнĕ, технологи, экономика çинчен çырнă т. ыт. те. Кавказа, Атăл çине, Донбаса, Урала тата çĕршывăн ытти районĕсене кайса çÿресе, вăл Россйăн çутçанталăк пуянлăхĕсемпе усă курмалли майсем çинчен тарăн шухăшлă статьясем çырнă. Вăл тăван çĕршывăн çĕр кăмрăк промышленноçне аталантарасшăн пулнă, правительство чиновникĕсем, ют çĕршывсем умĕнче пуç тайса, вырăс çар флотĕ валли çĕр кăмрăкне Англирен илсе килтернине хирĕç тăнă. Хăйĕн чылай статьисенче Менделеев никамран малтан кăмрăка çĕр айĕнче газификацилес, нефтепроводсем тăвас, нефтьрен çĕнĕ майсемпе тĕрлĕ япаласем тăвас тĕлĕшпе пысăк проектсем тунă.

1890 çулта Менделеев Петербург университетĕнчен кайнă. Патшан çутĕç министрĕ реакциллĕ ĕçсем тунине протестлесе, аслă ученăйăн ĕçрен тухмалла пулнă.

Часах вăл Виçепе тараса палатине ертсе пыма тытăнать, çине тăрса виçесемпе тарасасене тĕпчеме пуçлать. Менделеев çак тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсем, метрла система çине куçас ĕçе хатĕрленĕ, совет правительстви ăна 1918 çулта пурнăçа кĕртнĕ.

Менделеев Россия вăйлă аталаннă промышленноçлă çĕршыв пуласса кĕтнĕ. «Россйăн малашнехи кун-çулĕ çĕрĕçĕ кăна мар, мĕнпур йышши промышленноçсем аталаннинче килет»—тесе çырнă вăл.

Вăл пирĕн çĕршывăн производительнăй вăйĕсене аталантарма ĕмĕтнине патша Россйинче ытлекен пулман. Менделеевăн наукăри идейисем Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн кăна пĕтĕмĕшпех пурнăça кĕчĕç. Аслă ученăй ĕмĕчĕсем çитрĕç: пирĕн пурнăç ĕнтĕ Менделеевăн ырă ĕмĕчĕсенчен нумай мала иртсе кайрĕ.

Менделеев вилнĕренпе 45 çул иртрĕ. Унăн гениллĕ ĕçĕсем паян та совет ученăйĕсене хавхалантараççĕ, вĕсем Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пĕтĕм халăхпа пĕрле çĕршывăн экономикине хăватлăн çĕнетсе пыраççĕ.

Н. ФИГУРОВСКИЙ,
профессор, хими наукисен докторĕ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи плана тултарни çинчен урăх çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

Румыни

БУХАРЕСТ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Бухарестри пур хаçатсем те СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтернине тĕплĕ йĕлантарса паракан статьясем пичетленĕ.

«Скынтейя» хаçат «Коммунизм строителĕсен аслă çĕнтерĕвĕ» ятлă статьяра çапла çырать: империалистла çаткăнсем Корейăра, Вьетнамра, Египетра, Тунисра ним айăпсăр çынсене вĕлереççĕ, Парижра «Европа çарĕ» текенскерне тума васкасах хатĕрленеççĕ. Çав вăхăтра мирĕ юрăтакан политикăна пурнăçласа пыракан совет халăхĕ коммунизм обществи тăвас тĕлĕшпе ĕçлет, ку ĕçе пурнăçлассине шанса тăрать. Центральнăй Статистика Управленийĕн пĕлтерĕвĕ пĕтĕм тĕнчере миршĕн кĕрешме хавхалантаракан сасă пулса илтĕнчĕ, миллионшар рядовой çынсен чĕрисене мирпе демократи тата социализм лагерĕн тĕрĕс ĕçĕ çĕнтерессине ĕненсе тăрас шухăшлă тăвать.

«Универсул» хаçат «Совет çыннисем пултаруллă ĕçлесе коммунизм тăваççĕ» ятлă заголовокпа пичетленĕ статьяра çапла çырать:

Хальхи вăхăтри фактсемпе ĕçсене эпир кирек хăш енчен илсе пăхсан та, пирĕн пĕртен-пĕр çакăн пек вывода тумалла: социализмлă тĕнчен малашлăхĕ шанчăклă. Совет Союзĕ социализмран майĕпен коммунизма куçса пыни, вăл пурлăхпа укçатенкĕ тата мораль енĕпе хăватлă пулни мир вăйĕсем вăрçă вăйĕсене çĕнтерессине ĕнентерет, Румынири ĕççыннисене, тата ытти халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисене социализм тăвассишĕн тăрăшса ĕçленипе çĕнтерÿ тăвассине шанса тăма май парать.

Франци

ПАРИЖ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли 1951 çулхи государство планне ăнăçлă тултарни çинчен пĕлтерекен хыпарсене кашни кунах пичетлеççĕ. «Юманите» хаçат хăйĕн Мускаври корреспонденчĕ Жан Куэн çырнă пысăк статьяна пичетленĕ. Корреспондент хăйĕн статьинче СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕн пĕлтерĕвĕ пичетленсе тухнă пирки çырать.

Совет экономикипе культурин çак паха çитĕнĕвĕсем совет строӗ капитализмлă стройран нумай малта пынине кăтартса параççĕ, вĕсене социализмлă государствăра сталинла мир политикине пурнăçласа пынипе тума пултарнă, тесе çырать автор. Унтан автор СССР халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсем енĕпе плана мĕнле тултарни çинчен пĕлтерекен сведенисене илсе кăтартать.

Совет Союзĕнче халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне ăнăçлă тултарни çинчен пĕлтерекен хыпара «Либерасьон» хаçат та пичетленĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн делегацийĕ ООН Генеральнăй Ассамблейин председателĕ патĕнче пулни çинчен пĕлтерни

ПАРИЖ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчри Мир Совечĕн делегацийĕ ООН Генеральнăй Ассамблейин председателĕ патĕнче пулнă. Делегаци çапла пĕлтерет:

«ООН Генеральнăй Ассамблейин председателĕ Падильо Нерво господин паян 16 сехетре Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн делегацине йышăнчĕ. Делегаци составĕнче çаксем пулчĕç: Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн вице-председателĕсем: Эжени Коттон тата Пьетро Ненни, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ бюровĕн членĕсем: Изабелла Блюм, Андре Боннар профессор, Пьер Кот тата Ив Фарж.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн делегацийĕ Падильо Нерво господина Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Вена хулинче пулнă сессийĕ йышăннă резолюцисене, сăмахран, пĕр вăхăтрах хĕçпăшалланасси тата çав ĕç мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тăрасси çинчен йышăннă резолюцие панă.

Падильо Нерво господин Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ мĕнле ĕçленипе тата мĕнле ĕçсем тунипе интересленнĕ.

Тĕл пулса калаçнă вăхăтра общественность шухăшĕ тĕнчери çĕршывсем хушшинчи ыйтусене пăхса тухас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăнта тăни уççăнах палăрнă.

Париж, 1952 çулхи январĕн 30-мĕшĕ».

Миршĕн, Совет Союзĕпе туслă пурăнассишĕн!

ПАРИЖ, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Бордо хулинче мире хÿтĕлес ыйтупа халăх пухăвĕ пулнă. «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, унта 8 пин делегат пухăннă. Вĕсем Шаранта, Жиронда, Анатри́пе Тури Пиреней, Ло тата Гаронна департаменчĕсенчи тĕрлĕ хуласемпе ялсенчен пынă.

Пухура сăмах тухса калакансем Франци халăхне мире сыхласа хăварассишĕн, совет халăхĕпе тытакан туслăха тĕреклетессишĕн, Франципе ССР Союзĕ тата халăх демократи çĕршывĕсем хушшинче суту-илÿпе культура çыхăнăвĕсене вăйлатассишĕн кĕрешме тачă пĕрлештерме кирли çинчен каланă.

Пухура Пĕтĕм Францири мир совечĕн членĕсем Ив Фарж, Марсель Пренан, Булье аббат, Жермена Гийе тата Пети генерал пулнă.

Мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе Англире ĕçлекен комитетăн заявленийĕ

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе Англире ĕçлекен комитет ĕнер заявлени пичетлесе кăларнă, ăна Англии финанс министрĕ Батлер январĕн 29-мĕшĕнче общинăсен палатинче пĕлтернĕ хыпар пирки çырнă. Заявленире çапла каланă:

Батлер хăйĕн сăмахĕнче: Англия тупăсем хатĕрлессине çу хатĕрлес ĕçсенчĕн пĕрне суйласа илмелле, тенĕ. «Эпир халĕ хĕçпăшал нумай хатĕрлемелли, вăй çитерме çук пысăк программăна чакарас йышăнмасан, эпир халĕ мире тĕнчипе вăйсемĕш пайĕпе çыхăнса суту-илÿ тăвас ĕçре нумай чăрмантарма хăтланнисене сирсе ярас пирки çине тăмасан, эпир çитес уйăхсенче экономика енĕпе татах та пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкĕпĕр.

Эпир тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хирĕçÿсене, халĕ тĕнчери çĕршывсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăракан хирĕçÿсене, йĕркелеме пур майсемпе те тăрăшас вырăнне сиккĕ вăрçă вăрçатпăр. Пире ирĕк сĕрлесех çитерейсĕр материалсене хĕçпăшал тăвас ĕçре расходласа хумаççĕ, çав материалсемпе халăх пурнăçне лайăхлатас ĕçре усă курма чараççĕ Пире хамăр таварсене чылай çĕршывсене сутма, пире ахăт-çимĕç, йывăç тата чĕртавар нама илĕпекен çĕршывсене сутма чарчĕç. Халăх çав политикăна улăштарттарас пирки çине тăрса тăрăшмасан, пирĕн пурнăçри йĕркесене тата хытăрах начарлатма талăнĕç, пирĕн ачасене вĕренсе ÿстермелли йĕркесене начарлатма çĕнĕрен талăнĕç, тепĕр хут ĕçсĕр тăрса юлмалли пурнăç пулса тăрĕ. Иртнĕ вăхăтра миллионшар çынсем ĕçсĕр тăрса юлнипе мĕн тери хĕн-хур курса пурăннине курта пĕлеççĕ.

Мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе Англире ĕçлекен комитет халĕха тĕнчери çĕршывсене халăх вăхăтра пĕр-пĕринчен уйăрса тăракан хирĕçÿсене йĕркелессишĕн çĕнĕрен хытă тăрăшмашкăн пĕрлешме тепĕр хут чĕнет. Çакăн пек пĕрлешсе кĕрешнипе пăяна йывăрлăхран тухма пулать. Пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхлассишĕн килĕшÿ тума чĕнсе калани çине алă пусмалли кампание хутшăннине халăх Англире пирĕн ума хăрушлăха сирсе ямалли, хĕçпăшалланнă пирки пулса тăнă йывăрлăха пĕтермелли, пĕр-пĕрипе калаçса татăлса килĕштермелли, мирлĕ пурнăç тумалли çул-йĕре кăтартса парĕ».

Францири коммунистсен партийĕ ĕççынни массисен интересĕсемшĕн кĕрешет

ПАРИЖ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Францири коммунистсен партийĕн парламентри ушкăнĕ ячĕпе коммунист-депутатсем Жак Дюкло, Вальдек Роше, Франсуа Бийу, Раймон Гийо, Жанетта Вермерш, Артур Мисмо тата Жан Канн Франци наци пухăвĕнче пăхса тухма çакăн пек сĕнÿ тăратнă:

«Наци пухăвĕ правительствăна çапла тума чĕнет:

1. 1951 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа электричество энергийĕпе газ хаксене, чугун çулсем тăрăх тавар илсе çÿрессишĕн, пассажир билечĕсемшĕн, почтăпа телеграф çыхăнăвĕсемшĕн, дорогăшĕн, газолиншăн, удобренишĕн тата табакшăн тÿлемелли хаксене ÿстерес пирки кăларнă декретсене постановленисене пурне те пăрахăçласа.

2. Тĕрлĕ таварсен хакĕсене 1951 çулхи октябрь уйăхĕччен пулнă хакла тепĕр хут тавăрассипе мерăсем йышăнма чĕнет».

Монголире пĕтĕм халăх хурланать

УЛАН-БАТОР, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕ хăйĕн çулпуçĕ вилнĕ пирки хытă хурланать.

Маршал Чойбалсанăн ÿтне илсе пыракан траур поездне Совет Союзĕпе Монголи хушшинчи чикĕре кĕтсе илме çĕршыври пĕтĕм халăхăн—рабочисен, выльăх пăхакан аратсен, культура, наука тата искусство деятелĕсен, общественлă организацисен, Монголи çарĕ чаçĕсен представителĕсенчен тăракан делегаци кайнă.

Центрти тата аймаксенчи хаçатсем Монголи халăхĕ пысăк çухату пулнă пирки хытă хурланни, ĕçрăннисен хурлăхлă митингĕсем иртни çинчен çырнă хыпарсене, парти, çарăсен, хĕрарăмсен, профсоюз организацийĕсен тата ĕççыннисен çырăвĕсене нумай пичетлеççĕ.

Тунисри ĕçсем

ПАРИЖ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Иркине тухнă хаçатсем пĕлтернипчен Тунисри лару-тăру халĕ те нимĕн чухлĕ те лайăхланманни курăнать. Çĕршывра пĕтĕмĕшпе забастовка ирттерме хатĕрленеççĕ. Пĕтĕм Тунисри ĕççыннисен союзĕ тата Пĕтĕм Тунисри профсоюзсен пĕрлешĕвĕ ку забастовкăна февралĕн 1-мĕшĕнче ирттерме йышăннă. «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕм Тунисри профсоюзсен пĕрлешĕвĕ кăларнă чĕнÿре пĕтĕмĕшпе забастовка çак требованисене пурнăçлассишĕн кĕрешес тĕллевпе ирттермелли çинчен каланă: арестленисене ирĕке кăлармалла тата ссылкăна янисене каялла тавăрмалла, çар чаçĕсем халăха хĕсĕрленине чарса лартмалла, Тунис ыйтăвне Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче пăхса тухмалла, Тунисра закон кăларакан тата ĕç тăвакан власçен чăн-чăн органĕсене туса хумалла, ĕç укçине пособие ÿстермелле, коллективлă договорсем тумалла т. ыт. те.

Тунисри коммунистсен партийĕ хăйĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Унта вăл ытти çĕршывсенчи демократиллĕ организацисене, чи малтан, Францири коммунистсен партине Тунис халăхĕ майлă пулнăшăн тав тăвать.

Франци çарĕсем Бизерта хулинче, Бон çăмсалăхĕнче тата çĕршыври ытти районсенче Тунис халăхне хытă хĕсĕрлеççĕ. Вĕсем ĕççыннисен çуртĕсене аркатаççĕ, тыррине вăл-çимĕçсене пĕтереççĕ, нумай çынсене арестлеççĕ. Ĕнер Мензель Темим ялĕнче кăна 100 çынна арестленĕ.

«Комба» тата ытти хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Франци власçĕсем Тунисри «лару-тăру текех начарланмасан», унта çĕнĕ çар чаçĕсем яма чăрăнмалла, тесе йышăннă пулать. Анчах «Фигаро» хаçатра пичетленнĕ хыпартан власçсем Тунисе çĕнĕ çар чаçĕсем яни курăнать.

«Либерасьон» хаçат çапла пĕлтерет: январĕн 30-мĕшĕнче арабсен çĕршывĕсен, Азипе Африкăри çĕршывсен—пĕтĕмпе 15 çĕршыв представителĕсем ООН Генеральнăй Ассамблейин председателĕ патне тата Хăрушсăрлăх Советне çыру янă. Унта вĕсем Тунисра юлашки вăхăтра пулса иртекен ĕçсем хăйсене «хытă пăшăрхантарни» çинчен пĕлтереççĕ, çĕршывра пулса пыракан ĕçсем çине тимлĕ пăхма кирли çинчен асăрхаттараççĕ.

Демократиллĕ хаçатсем Тунисе никама пăхăнман çĕршыв тăвассишĕн, Франци колонизаторĕсем халăха хĕсĕрленине тата терорла ĕçсем тунине чарса лартассишĕн тăракан прогрессивнăй организацисен списокне малалла пичетлеççĕ. Çавăн пек требованисене, сăмахран, Пĕтĕм Францири ĕç конфедерацийĕ, «Ирĕклĕхе хÿтĕлессишĕн тата хисеплессишĕн кĕрешекенсен Алжирти фрончĕ» тата ытти организацисем те кăларса тăратнă.

Отто Гротеволь сăмахĕ

БЕРЛИН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ Отто Гротеволь ĕнер Берлинра Карл Либкнехт ячĕпе тăракан трансформаторнăй заводри рабочисемпе служащисен пухăвĕнче сăмах тухса каланă. Гротеволь нимĕç халăхĕ Германи пĕрлĕхне мирлĕ майпа тăвассишĕн тата мире сыхласа хăварассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа кăтартнă. «Германие пайланине хирĕç, çĕршыв пĕрлĕхĕшĕн кĕрешмелле. Пурте çар службинче пулмалли закона хирĕç, суйлав законне йышăнтарассишĕн кĕрешмелле. Вăрçă хатĕрлемелли договора хирĕç, мирлĕ договоршăн кĕрешмелле», тесе чĕннĕ вăл.

Хĕвеланăç Германире нимĕç халăхне Америка империалисчĕсен тарçисем туса хураççĕ. Нацистсем çакăн пек хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра нимĕç халăхĕн Германие мирлĕ тата демократиллĕ майпа çĕнĕрен пĕрлештерессишĕн, пĕр çĕршыв туса хурассишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшас пулать, тенĕ Гротеволь.

Пĕтĕм Германи суйлав законĕн проекчĕ çинчен, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати ырланă проект çинчен каласа, Гротеволь çакна палăртнă: Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Хĕвелтухăç Германипе Хĕвеланăç Германи представителĕсенчен суйлавсем ирттермелли условисене пĕтĕм Германире тĕрĕслеме тунă комиссире ĕçлеме килĕшни çинчен пĕлтерчĕ. «Шумах планне хирĕç эпир хамăрăн мирлĕ пурнăçшăн кĕрешмелли аслă плана—пилĕк çуллăх плана—кăларса тăрататтăр», тенĕ Гротеволь. Юлашкинчен Гротеволь Демократиллĕ Германи Республикин ĕççыннисем умĕнче мĕнле задачăсем тăни, пилĕк çуллăх план вĕсем умне мĕнле задачăсем кăларса тăратни çинчен, çав задачăсене пурнăçлас ĕçре рабочисемпе интеллигентсем пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçленин пĕлтерĕшĕ пысăк пулни çинчен каланă.

Америкăпа хĕвеланăç Германи влаçĕсем Германин хĕвеланăçĕнчи пайĕпе Демократиллĕ Германи Республики пĕр-пĕрин хушшинче суту-илÿ тăвас ĕçе чарса лартма хăтланаççĕ

БЕРЛИН. (ТАСС). Американецсем приказ панипе хĕвеланăç Германири влаçсем 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Демократиллĕ Германи Республикине таварсем яма ирĕк памаççĕ. Çавăнпа та Демократиллĕ Германи Республикинчен хĕвеланăç Германипе хĕвеланăç Берлина таварсем яма чарăннă. 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче Демократиллĕ Германи Республикипе хĕвеланăç Германи пĕр-пĕрин хушшинче сакăр миллион маркăллăх ытла таварсем улăштарса илнĕ пулсан, январь уйăхĕнче Германин шалти суту-илĕвĕ пĕтĕмпек чарăнса ларнă. Çавна пула хĕвеланăç Германире тата хĕвеланăç Берлинра ĕçсĕр тăрса юлакан йышĕ ытларах ÿсме пуçланă.

Халиччен опыт тăрăх çакă паллă: Германин шалти суту-илĕвĕн пĕтĕм тавар çаврăнăшĕнче Берлинра суту-илÿ тунă вырăнĕш пай чылай пулнă. Апла пулсан, Германин шалти суту-илĕвĕ чарăнса ларни хĕвеланăç Берлиншăн ытларах сиенлĕ пулать. Америка влаçĕсемпе Бонри влаçсем малашне те Германин шалти суту-илĕвне чарса пырсан, хĕвеланăç Берлинри фирмăсем текех ĕнтĕ Демократиллĕ Германи Республикинчен заказсем илме пултарайман.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Америка интервенчĕсем Корейăра çĕнĕрен тискер ĕçсем туни çинчен Корея тĕп телеграф агентстви пĕлтерни

ПХЕНЬЯН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăн тĕп телеграф агентстви Америка интервенчĕсем Корейăра çĕнĕрен тискер ĕçсем туни çинчен пĕлтерет. Америка самолечĕсем пулеметсенчен Корейăри мирлĕ халăх çине пăчăхтарса вĕлерекен газсем тултарнă пульăсемпе пенĕ. Январĕн 9-мĕшĕнче, 16 сехет тĕлнелле Америка самолечĕсем Канвон провинцийĕнчи, Мунчхонь уездĕнчи, Ульним вулăсĕнчи мирлĕ яла тапăннă, çакăн чухне вĕсем пăчăхтарса вĕлерекен газсем тултарнă пульăсемпе пенĕ. Ку ялта çар предприятийĕсем çук тата çарсем тăман. Çапах та ял çине хытă тапăннă, пулеметсемпе нумай пенĕ. Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем пилĕк çынна йывăр амантнă, 83 çынна пăчăхтаракан газпа хĕн-хур кăтартнă, хресченсен темиçе çуртне вут тивнипе çунса кайнă.

Америка интервенчĕсен çак тискерлĕхне курнă хресченсем каласа кăтартнă тăрăх, хресченсен тăмпа уйăмран тунă çурчĕсем пуля пырса тивсенех çунма тытăннă. Вут тивсенех çулăмпа пĕрле шурă тĕслĕ тĕтĕм тухма тытăннă, кайран тĕтĕм майĕпен хуралса, çĕр тĕслĕ пулса пынă. Пушар тухнă çĕрте питĕ усал шăршă, пăнтăхнă рис шăрши пек шăршă, сарăлнă. Çав тĕтĕмре сывлакансем пурте ÿсĕрме пуçланă, вĕсен куççулĕсем юхма тытăннă. Пушар патĕнче пулнă çынсем тепĕр кунне ура çине тăма пултарайман, йăх килменнипе антăрană, нумайăшĕ юнлă сурма тытăннă тата çав çынсен сăмсисенчен юн кайнă.

Инкек курнă халăха çав самантрах медицина енĕпе пулăшу панă. Е Хи Дон врач Корейăн тĕп телеграф агентствин корреспондентне çакăн çинчен каласа кăтартнă: инкек курнă çынсен сывлăхĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн, вĕсем пăчăхтарса вĕлерекен газ тивнипе чирлени паллă пулнă. Инкек курнисен нумайăшĕн çăварĕсемпе сăмсисем пĕрлеме пуçланă, нумайăшĕн сăмсисенчен юн юхма тытăннă.

1952 çулхи февраль уйăхĕнче лекцисемпе докладсем тата калаçусем ирттермелли ТЕМАТИКА

I.

1. СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарнин итогĕсем тата хуçалăхпа культура строительствин малашнехи задачисем.
2. Халăх пурнăçĕ пĕрмай лайăхланса пыни тата унăн культурăллă шайĕ ÿсни—социализмлă общество аталанăвĕн законĕ.
3. Совет Çарĕпе Совет Тинĕс-Çар Флочĕ—совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвĕсене тата унăн мирлĕ ĕçне шанчăклă хÿтĕлекенĕсем.
4. Сталин юлташ—малта пыракан совет çар наукине тăваканĕ.
5. Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешес ĕçре.
6. США империалисчĕсем—пĕтĕм тĕнчери халăхсен чи тискер тăшманĕсем.

II.

7. Чăваш АССР ялхуçалăхне 1952 çулта малалла аталантармалли задачăсем.
8. Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ—колхоз пурнăçĕн тĕп законĕ.
9. Ĕç ресурсĕсемпе туллин усă курни—кашни колхоза хуçалăх ĕçĕнче çитĕнÿсем кÿрекен никĕс.
10. Паха вăрлăх—пысăк тухăçлă тырпул никĕсĕ.
11. Тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрлер.
12. Вырăнти тата минераллă удобренисемпе пур майсемпе те усă курни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерме май парать.
13. Выльăх апатне упрани тата унпа тĕрĕс усă курни—колхозсенче выльăха лайăх хĕл каçарма кирлĕ условисем.
14. Фермăсенче çамрăк выльăха йышăнас тата ăна пăхса усрас ĕçе тĕрĕс организацилер.

III.

15. Чăваш АССР промышленноçне 1952 çулта малалла аталантармалли задачăсем.
16. Продукцин хăйне ларакан хакне пĕрмай чакарса пыни—ĕççыннисен пурнăçне малалла лайăхлатмалли никĕс.
17. Вăрман хатĕрлевĕ тĕлĕшпе Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене срокчен пурнăçлар.
18. Промышленность предприятийĕсем, сурт-йĕрсемпе коммунальнăй предприятисем тумалли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва аплăн сарар.
19. Производство новаторĕсен çитĕнĕвĕсене—массăсем хушшине.
20. Финанс обязательствисене вăхăтра тултарни—халăх хуçалăхĕпе культурине малалла аталантармалли чи кирлĕ условисем.

ВКП(б) ОБКОМĔН ПРОПАГАНДĂПА АГИТАЦИ ПАЙĔ.

Çитес навигацие хатĕрленеççĕ

Шупашкарти пристаньре ĕçлекенсен пухăвĕ иртнĕ çулхи ĕç итогĕсемпе çĕнĕ навигацие хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен сÿтсе явнă.

Пристань коллективĕ иртнĕ çулхи навигацие ăнăçлă вĕçлерĕ. Вырăнти флотпа груз турттармалли плана 160 процент тултарнă, 60 тонна топливо перекетленĕ. Ку тĕлĕшпе «Ударник Потапов» катер команди паха тĕслĕх кăтартрĕ. Вăл иртнĕ сезонра икĕ уйăх ĕçлемелĕх топливо перекетлерĕ. Суднăсен командисем хушшинче «Иосиф Сталин» пăрахут механикĕ, Сталинла премин лауреачĕ Бурлаков юлташ меслечĕпе ĕçлесси аплă сарăлса пырать. Çак меслетпе ĕçлесе, речниксем суднăсене çулла, навигаци вăхăтĕнчех, юсаса тăраççĕ. Çапла тунипе пула, хĕллехи вăхăтра юсав ĕçĕсем сахал пулаççĕ. Бурлаков юлташ пек ĕçлени пристань коллективне 79 пин тенкĕ укçа перекетлеме май панă.

Правило тăрăх, суднăсене çуса тасатма тата пĕчĕк юсав ĕçĕсем тума навигаци вăхăтĕнче кашнине 6 хут ĕçлеме чармалла. «Ударник Потапов» катер çинче ĕçлекенсем хăйсен суднине кашни кун çуса тасатнипе тата механизмсене вăхăтра çу сĕрсе тăнипе пула, катера иртнĕ çулта икĕ хут çеç ĕçлеме чарнă. Çакă планпа пăхнипчен 200 сехет ытларах çÿреме тата юсав ĕçĕсенче 4 пин тенкĕ укçа перекетлеме май панă.

Пристань коллективĕ коммунизмăн аслă стройкисем валли каякан пур грузсене те вăхăтра ăсатнă.

Социализмлă ăмăртура пысăк çитĕнÿсем тунăшăн малта пыракансене Атăл çинчи грузсем турттаракан пароходствăн Хусан районĕнчи управленийĕ Хисеп грамотисемпе наградăланă тата укçа парса премиленĕ.

«Ударник Потапов» катер механикне Н. Иванов юлташпа унăн помощникне Н. Забегаев юлташа, çавăн пекех шкиперсене—А. Скрябин, Н. Стремин, А. Григорьев, В. Пушкарев юлташсене тата Журавлевпа Андреев кочегарсене Хисеп грамотисем панă.

Пристань коллективĕ умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Çуркунне Атăлпа Дон хушшинчи канала ĕçе ярсан, Атăл тăрăх суднăсем çÿресси тата та ытларах ÿсет, пирĕн республика столици пилĕк тинĕс порчĕ пулса тăрать, Шупашкар тĕлĕнче пăрахутсем нумайрах чарăнма пуçлаççĕ. Пристань коллективĕ çитес навигацие тăрăшса хатĕрленет.

Çыхăну уйрăмĕсенчен килнĕ хыпарсем

☆ Республикăри «Союзпечать» уйрăмĕ пĕлтĕр плана хаçат-журнал сутмалли 25 киоск уçма пăхнă. Плана ăнăçлă пурнăçланă. Халĕ кашни район центрĕнче хаçат-журнал сутмалли киосксем ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Чутай район центрĕнчи П. Данилов юлташ ĕçлекен киоск хаçат-журнал сутмалли плана 180—200 процент тăран тултарать. Лайăх ĕçленĕшĕн П. Данилов юлташа республикăри «Союзпечать» уйрăмĕ укçа парса премиленĕ.

Республика столицинче çак кунсенче çĕнĕрен 3 киоск уçнă.

☆ Республикăри Çыхăну управленийĕнче 1949 çултанпа инструкторсемпе экономистсен, ревизорсемпе бухгалтерсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе кружок ĕçлет. Кружокра 50 çын вĕренет. Вĕсем халĕ пурте 3—4 специальноçа вĕреннĕ.

☆ Республикăри ĕççыннисем халăх демократи çĕршывĕсенче тухса тăракан хаçат-журналсемпе питĕ интересленеççĕ. Уйрăммăнах ĕççыннисем «Союзпечать» уйрăмне килекен «Китай», «Германская демократическая республика на стройке», «Китайский рабочий», «За прочный мир, за народную демократию», «Народный Китай» хаçат-журналсене юратса вулаççĕ. Çав хаçат-журналсене кăçалхи январь уйăхĕнче кăна пиншер экземпляр сутнă.

☆ Колхозсене телефон кĕртесси çултан çул лайăхланса пырать. Пĕлтĕр республикăра пур ял Совечĕсене те телефон кĕртсе çитернĕ. Унсăр пуçне пĕрлешсе пысăкланнă чылай колхозсене телефон кĕртнĕ.

Первомайски—инçетри районсенчен пĕри. Кунта, ял Совечĕсемсĕр пуçне, пĕрлешсе пысăкланнă 8 колхоза телефон кĕртнĕ.

11.000 çын курнă

Январĕн 23—28-мĕшĕсенче вырăссен паллă драматургĕ Островский çырнă «Правда—хорошо, а счастье лучше» ятлă комеди тăрăх ÿкернĕ кино кăтартрĕç.

Çак вăхăт хушшинче «Родина» кинотеатрта 10 сеанс пулнă, вĕсенче пурĕ вунпĕр пине яхăн çын пырса курнă. Хулари нумай учрежденисем, предприятисем, фабрикăсем кинокартинăна ушкăнпа пырса курнă.

Куракансем «Правда—хорошо, а счастье лучше» кинокомедие питех те ырлаççĕ.

Халĕ çак кинокартинăна республикăри ытти кинотеатрсемпе колхозсенче кăтартма районсемпе хуласене янă.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 2-мĕшĕнче, тата Ыран, февралĕн 3-мĕшĕнче чăвашла çĕнĕ спектакль

«ПУРНĂÇА ЮРАТСА»

(Юлиус Фучик)

Ыран, февралĕн 3-мĕшĕнче, кăнтăрла вырăсла спектакль

«ЖЕНИТЬБА»

Спектакльсем кăнтăрла 12 сехетре, каçхине 8 сехетре пуçланаççĕ.

«Басон» фабрикин дирекцийĕ, партбюро, фабком, комсомол комитечĕ тата пĕтĕм коллектив январĕн 31-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре «Басон» фабрикин директорĕ, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет депутачĕ

Андриан Степанович ТЮШКИН

вăхăтсăр вилни çинчен, унăн арăмĕпе—Зоя Ивановна Тюшкинăпа тата ачисемпе пĕрле хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-09, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—8-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00322 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.